К84.09(=Чув)
Ы
Ч-39391

НИКОЛАЙ ЫДАРАЙ

# ЫРӐ ТӖРЛЕНЧӖК — ЫЛТӐН ТӖПРЕНЧӖК

Национальная библиотека ЧР
4-039391

ВОЗВРАТИТЕ КНИГУ НЕ ПОЗЖЕ
обозначенного здесь срока

Обязат. экз.
К84.09(=Чув)
Ы1

НИКОЛАЙ ЫДАРАЙ

# ЫРĂ ТĔРЛЕНЧĔК — ЫЛТĂН ТĔПРЕНЧĔК

Асăнмалăх – савăнмалăх
Автортан: Н. Ыдарай
20. августа 2004 г.

Шупашкар
2004

УДК 894. 344
ББК 84 /2 Рос – Чув/ — 4
Ы 99

**Ыдарай Н. В.**
**Ы 99 Ырӑ тӗрленчӗк — ылтӑн тӗпренчӗк.** Сӑвӑсем.— Шупашкар, 2004 — 108 с.

*Автор хӑйӗн кӗнекине тӗрлӗ ҫулсенче ҫырнӑ сӑввисене /рубайисене/ кӗртнӗ. Шухӑша кӗскен те витӗмлӗн палӑртакан кашни хайлав асамлӑ поэзи тӗнчине илсе кӗрет, поэт пире пурнӑҫри тӗрлӗрен пулӑма ҫӗнӗлле пӑхма хистет.*

ББК 84 /2 Рос – Чув/ — 4

ч-39391
НАЦИОНАЛЬНАЯ БИБЛИОТЕКА
ЧУВАШСКОЙ
РЕСПУБЛИКИ

© **Ыдарай /Васильев/ Н. В.**

ПРОВЕРЕНО
2010



## АВТОРТАН

Çырмасăрах сӳнме
Эп çын пулса ӳсмен,
Пурнатăп савнă халăха
Калас тесе хам сăмаха.

# ЯВĂШ ÇЫННИ — НИКОЛАЙ ЫДАРАЙ

Автор — Васильев Николай Васильевич /Николай Ыдарай/ 1925 çулхи кăрлачăн /январĕн/ 10–мĕшĕнче Чăваш Республикинчи Комсомольски районне кĕрекен Хирти Явăш /Полевые Яуши/ ятлă ялта хресчен кил–йышĕнче çуралнă.

Амăшĕ — Леонтьева Фекла /Розова, Цветкова/ Кĕрекаç пики пулнă, мăшăрĕ пĕрремĕш тĕнче вăрçинче хыпарсăр çухалсан, çамрăк хĕрарăм Хирти Явăша ачипе пырса кĕрет.

Ашшĕ — Леонтьев Василий Леонтьевич вăтам пурăнакан, çăм машини тытакан хресчен пулнă, ывăлĕ çуралсан икĕ çултанах çĕре кĕнĕ, вара амăшĕпе ачин тĕп çуртран тухса килтен киле куçса çӳреме тивет. Колхоза кĕрсен тин вĕсем вырăнлă тата çуртлă пулаççĕ.

Николай Васильевич, ачаранах нуша кукли çисе ӳснĕскер, кĕçĕннисен хӳтлевçи пулма тĕв тăвать. Паянхи кунччене вăл ачасемшĕн, çамрăксемшĕн вăй хурса ĕçлет.

Пирвайхи сăвви ун 1941 çулхи ака уйăхĕнче «Сунтал» журналăн /халĕ вăл «Ялав» ятпа тухать/ 4–мĕш номерĕнче кун çути курнă, сăвăласа çырнă юптару ячĕ «Çăмламас упа» /«Мохнатый медведь»/.

Çав çулах çамрăк авторăн иккĕмĕш тĕнче вăрçи пуçланнипе, вĕренес ĕмĕтне пăрахса, колхозра учетчик пулса ĕçлеме тивет. Вăтам шкулсенче укçалла вĕренмелле пулин те, пулас писатель Аслă Чурачăкри вăтам шкула вĕренме кĕрет, анчах та вĕренсе пĕтереймест, 1943 çулхи нарăс уйăхĕнче вăрçă çулĕ çине тăрать. Вăрçă хыççăн детдом воспитателĕ, клуб пуçлăхĕ, райсобес инспекторĕ тата учитель пулса ĕçлет, каярах комсомол путевкипе Хусана вĕренме каять, çав çулсенче литература ĕçне иккĕмĕш хут пуçăнать.

Хаçат–журналсенче кăна пичетленни çырлахтараймасть Николай Васильевича, вăл кĕнекесем çапса кăларас енне туртăнать. Пĕрремĕш кĕнеки 1958 çулта Шупашкарта пичетленсе тухать. Унтанпа автор çирĕме яхăн кĕнеке парнелеме пултарчĕ вулакансене. Акă вĕсен ячĕсем:

«Юптарусем» /«Басни»/, 1958; «Вуласа тух — тупсăмне туп» /«Прочитай и отгадай»/, 1960; «Юптарусем» /«Басни»/, 1960; «Тусăмсене — ачасене» /«Друзьям — малышам»/, 1964; «Чăн сăмахăн суйи çук» /«Что правда — то правда»/, 1972; «Авалхи туссем» /«Старинные знакомые»/, 1974; «Чĕрĕлĕх» /«Живинка»/, 1982; «Ытарлăх» /«Скрытки»/, 1985; «Айпике» /«Айбиге»/, 1987; «Сăпка юррисем» /«Колыбельные песни»/, 1989; «Кĕçĕннисен кĕнеки» /«Книга для маленьких»/, 1991; «Ачасен азбуки» /«Детская азбука»/, 1992; «Савăк вăхăт» /«Беззаботные годы»/, 1993; «Кайăксем» /«Птицы»/, 1996; «Азбуки — ăс пуххи» /«Азбука — начало знаний»/, 1997; «Чĕр

## АННЕ — ЧИ ÇЫВĂХ ЧУН

Пире кун панă çын — Анне,
Анне — чи çывăх чун.
Аннен асамлă ыр ятне
Таса упрасшăн çун!

## ПĔР ХИСЕПЛĔ ИК АННЕ

Пĕрре анчах тăван Анне,
Пĕрре анчах Çĕршыв – анне.
Пĕлес пулсан, çак ик Анне
Пĕртан хиселлĕ ĕмĕрне.

## АННЕМĔР УМĔНЧЕ

Анне çак аслă çĕр çинче
Тава тивĕçлĕ хĕрарăм.
Кашнин Аннемĕр умĕнче
Нихçан каçми мăн парăм.

## ЫРРИПЕ ХУРРИ

Атте – аннешĕн чăн ырри —
Ача – пăча пурри,
Çавăнпа йўçенкĕ çав тери
Ача – пăча хурри.

## ЁМĔР ПАЛЛИСЕМ

Ачалăх — ăс – хал пуçтарни,
Яш ěмěр — ăс – хал вылятни,
Çемьелěх — ăс – хал çěнетни,
Ват ěмěр — ăс – хал салатни.

## ЁÇ ВĂЛ — ПУРНĂÇ

Пур вăйпа ухăнса ěçлекен —
Пурнăçа малалла тěртекен,
Ёç çине вирелле пăхакан —
Пурнăçа каялла туртакан.

## МĔН ТУРĂН?

Пурнăç — пăрăнăç, тесе
Кулленех сан тарăху,
Анчах ăна юсас тесе
Мěскер эс турăн ху!

## ПĂЧĂР ÇИНЧЕН

Пăчăр питě ырлать пурнăçа,
Пурнăçа сивлемест нихăçан:
Пырши тухтăр, çапах та çав чун
Пурăнасшăн татах пěр виç кун.

## ПУЛТАРУЛĂХ

Ан хăра йывăрлăхран,
Пултарулăхна ÿстер:
Пěр тěпренчěк вăрлăхран
Пин тěпренчěк çитěнтер.

## КАНАШ ПИРКИ

Канаш пама та ирĕк пур,
Канаш илме те ирĕк пур.
Канаш паран çынна — итле,
Анчах ху пĕлнĕ пек шитле.

## ВĔРЕНӐ

Çăмăл маршăн вĕренме
Кам пултарĕ кӳренме?
Вĕренмешкĕн йывăр пулнăран
Çăмăллăн утатăн пурнăçра.

## ПАРХАТАР

Ачаран, мĕн пĕчĕкрен
Ăс–хал пĕрчи пуçтар:
Пуç сăхнă пĕрчĕрен
Пуçланĕ пархатар.

## ИЛЕМ ТЕСЕН

Умма ӳксен тулли илем,
Чуна пырса тивет хĕлхем,
Кăрт! çеç тапса илет чĕре...
Эп пит хавас кун пек чире!

## МĔН–ШИ ВĂЛ ИЛЕМ?

Илем — куçпа куран тасалăх,
Илем — ытарлă сăн–сăпат,
Илем — асра юлан асамлăх,
Этем чунне çĕклен хăват.

## ИЛЕМЛӖХ ÇУРАЛНИ

Пӗчӗкçессӗ ешӗл чӗмекрен*
Ытарма çук Роза çуралать,
Туйӑмпа ӳтленнӗ ӗмӗтрен
Чӑн паха илемлӗх çуралать.

## ЧӖРЕ ЫРРИ

Тӗнче çути — куçа хавас,
Чуна хавас — илем пурри.
Таса илем, мӗнле калас,
Туйма пӗлен чӗре ырри.

## ИСТОРИ ÇУЛӖ

Истори çулӗ питӗ вӑрӑм çул,
Ун вӗçне – хӗрне курма май çук,
Палӑрсан çеç халӑх ӗçӗнче,
Йӗр хӑварӑн аслӑ çул çинче.

## КУККУК

Авӑтать Куккукӗ: — Кук! — тесе,
Ачамран хисеплӗх çук! — тесе.
Ачине пӑрахнӑ Куккуксен
Савӑк пулмӗç ватлӑх кунӗсем.

---

* ***Чӗмек — вырӑсла "бутон" теççӗ.***

## КУЛĂШ КУСТĂРМИ

### АБСТРАКТЛĂ ЎКЕРЧĔК

— Тусăмсем, мĕнле пекрех сире
Эпĕ икĕ çул сăрланă пир?
— Мĕнле калас, паха пире
Мĕн тума варланă — ши эсир?

### АЙВАНСЕН АЙВАНЛĂХĔ

Айвансем сăхха переççĕ —
Телей кĕтеççĕ турăран.
Ăс ыйтма анчах унран
Тем пирки — çке пĕлейместĕ.

### ĂСЧАХ

Кăркка пек курать хăйне,
Хур аçин тăсать мăйне,
Хурчăка пек явăнать —
Чĕп туса сана таптать.

### ЙĂПĂЛТИ

Йăпăлти туянать хĕрлĕ роза çыххи:
— Пуçлăха чыслани пулĕ, — тет, — чун сыххи.
Аслине ăнсăртран чĕр йĕпсем лекесрен
Вăл чечек çыххине тасатать йĕплĕхрен.

## КĔТ ЭРНЕ!

Хăйне кирлĕ пысăк ĕçпеле
Пуçлăх патне пынă Кĕтерне.
Ăна савăнтарнă вирелле:
— Пуçлăха курас — тăк... кĕт эрне!

## ПАРХАТАР

Ан пул этем асси — ханттар,
Ятна ярса ĕçрен ан тар:
Ĕçре тăкмасăр чĕрĕ тар
Кураймăн пархатар.

## ПУÇÇАПАС ПИРКИ

Пуçра телейĕм çук тесе
Ма пуççапас — ха кĕтесе?
Пурăниччен шав пуççапса
Ĕçе тăвасчĕ пуçарса.

## ПУШĂ ПИЧКЕ ХĂРАХХИ

Кам сўсленчĕк ĕçĕпе,
Паврама анчах маттур,
Унăн пушă пичкепе
Шав тăвас пĕрпеклĕх пур.

## ПЎРНЕСЕМ ÇИНЧЕН

Ĕç ăнать кашни пўрне
Пулăшсассăн пĕр — пĕрне,
Пўрнесем пулсассăн уйрăмшар
Ĕç тума унайлă мар

## ФИЛОСОФИ ПĔРЧИСЕМ

### ĂСЛĂХ КУРКИ

Ăслăх куркине алла илетĕн,
Тутлăха кĕтсе тăрать тута,
Астивсе пăхатăн та сисетĕн:
Йўçĕ ват анчах иккен унта.

### ВĂЙ — ХАЛĂХРА

Уйрăм çын вăй—халĕ халăхра,
Халăхпа пĕрле пул ĕмĕрех —
Тĕп тымар пулсассăн тарăнрах,
Йывăççи те пулĕ çирĕпрех.

### СĂПАЙЛĂХ

Мухтанасси мухтавлă мар,
Ан васка пит мухтанма:
Ăсталăхна ўстер кăна —
Ĕç хăех мухтать сана.

### ЙĂНĂШСЕМ ПИРКИ

Йăнăшма пултарать ĕçлекен —
Вăхăтра тўрленмешкĕн вĕрен.
Пытарса пурăнсан йăнăша
Сарăплатăн анчах тус—йыша.

## ЙЁРСЕМ

Тĕрлĕрен йĕрсем выртса юлаççĕ
Çĕр çине çуралнă этемрен:
Ырă çын йĕрне хака хураççĕ,
Улах çул ултавлă ĕлĕкрен.

## СĂВĂ ХАКĔ

Ăслăхсăр тĕрленнĕ сăвăсем —
Хылчăкпа хыçрам анчах вĕсем.
Çырнине, ăс – хал пĕрчи пуртан,
Хисеплеççĕ çăкăрпа пĕр тан.

## СĂМАХ ХĂВАЧĔ

Ыр сăмах ытарлăн ыткăнать
Персе янă тупă йĕтри пек,
Чунсене илет вăл тыткăна
Хал парса хăвачĕ пуррипе.

## СĂНЛĂХСЕМ ПИРКИ

Чĕрери ыр туйăм хĕмлĕхне
Çĕнĕ сăнлăхсем тупса ырла.
Çĕнĕ сăнлăхсен илемлĕхне
Çимелли шыранă пек шыра.

## ÇЫРАВÇĂ

Çыравçă туйтăр хăйĕн тивĕçне:
Вăл — вăрлăх акакан.
Вăл ўстернĕ ăслăх çимĕçне
Хапăл тутăр вулакан.

## ХЁМ

Еплерех урсан та Хӗл – хӑна,
Сив Хӗле ҫӗнтерӗ Ҫуркунне.
Ҫав чӑна пӗлсе тӑни кӑна
Хӗм парса тӑрать этем чунне.

## ТӲПЕ МУЛӖ ПИРКИ
/шӳт/

Кашниех ҫӳл тӳперен
Ҫӑлтӑрсем татса илсен эпир,
Ҫӳл тӳпемӗр теплерен
Пулса юлмӗ – ши пуш хир?..

## ХӖЛ КУҪҪУЛӖ

Кап! Кап!.тумла ҫӗре ӳкет —
Сив мучи йӗрет тумне хывса:
Хӗллехи хаярлӑхшӑн тӳлет
Вӑл таса куҫҫулӗпе хаса.*

## УЛМУҪҪИ

Ҫурхи кун ҫӗн юрӑ кӗвӗлет.
Улмуҫҫи ҫав ырӑ кунсенче
Ҫимӗҫ ӳстерме кирли ҫинчен
Манӑҫми чӗр тӗвӗ тӗвӗлет.

## ТЕЛЕЙ ТЕНИ

Ёлӗкренех ыр ятлӑ
Ёҫле пӗлен хастар:
Ёҫчен пулсассӑн алӑ,
Этем телейсӗр мар.

* *Хаса – айӑплани.*

## ТЕЛЕЙ

Телей парса пире çуратнă,
Ăс парса пилленĕ ваттисем:
Айвансем ăна часах çухатнă,
Тар тăкса ĕрчетнĕ ăслисем.

## ХАСТАРЛĂХ

Хастарлăху пулсан —
Ĕçлен ĕçне ăнтарăн,
Хастарлăх пулмасан —
Çынна анчах култарăн.

## ХĔÇ ТАТА ĔÇ

Вилĕме ырланă Хĕç,
Ĕç юратнă Пурнăçа:
Хĕç вăйне çĕнтернĕ Ĕç,
Çавăнпа вăл — тĕп хуçа.

## ĔÇПЕ ЮЛТАШЛĂ

Ыр çын алли ĕçпе юлташлă,
Ун аллине ĕç пăхăнать.
Ялан калаççĕ: ылттăн алă
Ĕçе куллен кун ылттăнлать.

## ЫР ÇЫН

Ик хут çын ĕмĕрĕ килмест,
Пурнасси виçеллĕ çĕр çинче.
Ыр çын вилсессĕн те вилмест —
Пурăнать вăл хăйĕн ĕçĕнче.

## ЫРӐ ТӖСЛӖХ ХӐВАР

Ыр хуҫа эсӗ пул пурнӑҫра,
Пурнӑҫпа эсӗ пул пӗр кавар:
Ыр ӗҫпе палӑрса халӑхра
Тӗсетмелӗх ыр тӗслӗх хӑвар.

## ЫТАРЛӐ ЫЙТУ

Аллу пыма пӗлмесен
Пархатарлӑ ӗҫ патне,
Чӗрне вӗҫне ҫӳхетсе
Ма хыҫмалла ӗнсене?..

## ЧӖРӖП ЧӖППИ

Анюк чӗрӗп чӗппине
Ҫывӑх тус пек хисеплет, —
Кунне виҫҫӗ хӑнине
Тутлӑ апат ҫитерет.

## ЧӖКЕҪ

*/йыхрав/*

Чӗкеҫ, кил, чӗкеҫ, кил!
Чӗвӗлтетсе вӗҫсе кил.
Чӗкеҫ, кил, чӗкеҫ кил!
Чӗрлӗх ӑшши илсе кил.

# ПУРНĂÇРИ ПУЛĂМСЕМ

## АЧАЛĂХ ПАРНИ

— Каласа парсам, мана, ачалăх,
Мĕн хăвартăн эсĕ асăнмалăх?
— Асамат кĕперĕ пек сăнарлăх
Эп хăвартăм ĕмĕр асăнмалăх.

## ВĂХĂТ ВИÇИ

Вăхăтăн виçи ытла кĕске,
Вăхăта тăсма май çуккă — çке,
Ырă ĕçпеле кумсан кăна
Вăрăмрах тума пулать ăна.

## ВĂХĂТ ПАЛЛИСЕМ

Çур кунĕ — ачалăх кĕвви,
Çур кунĕ — яш ĕмĕр ташши,
Кĕр кунĕ — кĕрнеклĕх тĕвви,
Хĕл кунĕ — хисеплĕх ăшши.

## ВИÇЕЛĔХ

Пурнăçра питех те кирлĕ аршăн,
Пур ĕçре те кирлĕ ар виçи,
Виçерен тухсассăн кирлĕ маршăн
Пулаймастăн тĕрĕслĕх хуçи.

## ЁМĔР

Çакă çутă тĕнчере
Пĕр ёмĕр çех пире.
Пĕртен пĕр ёмĕре
Пурнас пулать хитре.

## ÇŸЛЛĔХ ПИРКИ

Килĕшет пулсассăн çӳллĕ вырăн —
Çӳллĕхре эс пул:
Çынлăхран тухма анчах ан çырăн,
Этем йĕркеллĕ юл!

## ÇЫН ПУЛАССИ

Çăмăлпах хисеплĕ пулаймастăн,
Питĕ йывăр сумлăх тупасси:
Çынлăхран тухатăн та пĕр ластăк —
Ёмĕрлĕх пулатăн çын асси.

## ТĔЛЛЕВ ПУЛСАН...

Чăнлăха чунпа туян пулсассăн,
Çут тĕллев пулас пулсан умра —
Тăвăл хумĕнчен те хăрамастăн,
Хăрамастăн вутлă çулăмран.

## ЫРĂ ТУС

Хĕнлĕхре куратăн çывăх тусăн
Чĕринче ыр туйăм пуррине:
Пуç çине ӳксессĕн йывăр пусăм,
Хăй çине илет вăл çуррине.

4-39391
НАЦИОНАЛЬНАЯ БИБЛИОТЕКА
ЧУВАШСКОЙ
РЕСПУБЛИКИ

## ЯТ — ХУШАМАТ

Ял çинче япăхланнă ыр ят
Çĕнелмест пулсассăн хулара,
Хулара çуралнă хушамат
Ял çинче тасалĕ—ши вара?

## ЙĔРТЕТ

Кам хăйĕн ĕçĕнче
Тума пĕлмест йĕр те,
Калаççĕ ун çинчен:
Вăхăта анчах йĕртет.

## КУН

Иртсе пырать кун хыççăн кун,
Виçи пит шутлă ун.
Паха ĕçпе кумсан кăна
Тăсма пулать ăна.

## МĂНТТАЙ

Юман пек вăл пĕвĕпе,
Вăкăр пек вăйĕпе,
Анчах писмен пирки ĕçре
Вăл ĕçе тăрсан — ӳпре.

## МЕММЕ

Ĕçре писмен çынна
Май çук хисеплĕ çын теме.
Тӳрпилĕк айвана
Пĕр хак анчах: — Мемме!

## МĔНЛЕ ĔÇ

Мĕнле ĕçĕн çăлĕ тарăн,
Хăшĕнче пур пархатар —
Ун çинчен пĕлме пултарăн
Çамкаран тăксассăн тар.

## КУЛĂШ ĂСТИНЕ

Куç куран çитменлĕхрен
Кулас килет пулсассăн — кул!
Анчах ăсталăх çитменрен
Ял кулли пулса ан юл.

## ПУÇТАХХИ

— Эпĕ тава тивĕç ытларах! —
Пуçтаххи пĕр вĕçĕм пусăхлать.
Асăрханă пулĕ: çапларах
Çăмарта туман чăх кăтăклать.

## ÇĔНĔ ПУÇЛĂХ

— Пĕр чĕлхе тупма ан шухăшла
Çĕнĕ пуçлăхпа, тăванăм, эс. . .
— Калаçма пĕлмест – им чăвашла?
— Унпа мар, эрех – сăра ĕçмест.

## ÇУЛ НУШИ

Илтнĕ эпĕ йывăр тенине
Аслă çулăн нуши,
Анчах мăн çулăн нушине
Кам мĕнпе висне – ши?

## СЁМЛЁХПЕ ÇУТЛĂХ

Каçхи сёмлёх картăр каррине
Мĕн пур пек хура тĕсе пухса,
Пурпĕр килĕ Çутлăх çĕр çине,
Сар хĕвел те тухĕ йăл! кулса.

## ÇАМРĂК ЁМЁР

Çамрăк ĕмĕр — чĕрĕ пурнăç пайĕ —
Ыткăнса килет мăн çулпала.
Иртĕхес пулсан, вăл иртсе кайĕ
Сисĕнмесĕр ансăр çулпала.

## ÇУЛÇĂПА ÇИМĔÇ

— Çулçă, ма кулатăн вĕçĕмрен?
— Çĕр çине чĕр çимĕç ÿкнĕрен.
— Йыш валли пуçтарнă хаклă мул
Йывăртан ÿкет вăл — пĕлнĕ пул!

## ÇЁЛЕН

— Çуккă,— тет Çĕлен, — çак çĕр çинче
Урăхран пĕр чун — ман пек тÿрри!..
Вăл суять. Ун тÿрлĕхĕ çинчен
Уççăн кăтартса парать йĕрри.

## ÇЫРАКАН ВИЛСЕН

Вут çунать те, кĕл анчах юлать,
Тăрă шыв вĕрет те, пăс пулать.
Çыракан вилсессĕн мĕн юлать?
— Çавăрса каланă ăс юлать.

## АШАК

Лаша çумне выртнă та Ашак:
— Пулăп, — тенĕ, — эпĕ те лаша.
Ылттăнпала çуммăн выртнăран
Ыр металл пулайĕ – ши тăмран?

## «ĂНТАРУÇĂ»

Слон тума пĕлет вăл Шăнаран,
Писнĕ шыв тума пĕлет юртан,
Çавăн пек ăсталăх пулнăран
Халăх ёнсине хырса выртать.

## ĂСПА СУХАЛ

Мăк сухал ăс – хакăл йăви мар.
Ăс пухас пулсассăн — сухала,
Качака — сухаллă янавар
Этемрен те ăслă пулмалла.

## ВĂРĂМТУНА

Мăн хисеп кĕтет Вăрăмтуна:
— Юррăмшăн чыс тивĕçлĕ мана!..
Мĕнле хисеп пултăр – ха ăна? —
Юрласа вăрланă вăл ăна.

## ВĔÇЕВ ПИРКИ

Каппайса мухтаннă Шурă Хур:
— Хăлат пек вĕçме çунатăм пур!..
— Шурă Хур, пулас тесен Хăлат
Кирлĕ çунатпа пĕрле хăват!

## ЯПĂХ ТУС

Мĕлкепе пĕр майлă япăх тус,
Санпала пĕрле вăл уяр кун,
Хура кун çитсен пуçна çеç ус —
Сан çумра палли те çуккă ун.

## МАРС ТАТА МИР

Мул хуçишĕн ырă — Марс,
Ĕçлекеншĕн — Мир.
Пире вăрçă кирлĕ мар,
Мирпе туслăхшăн эпир.

## ПАЯНХИ СĂМАХ

Паян эпир калатпăр:
Вăтамлăхран вăтан,
Ĕçре пул хурçă паттăр,
Ут вăхăтпа пĕртан!

## ПУЛАСЛĂХ ÇИНЧЕН

Ĕмĕрсем ĕмĕтленнĕ пуласлăх
Паянхи ĕçлĕхре ÿтленет:
Çывхартать ăна ĕçри хастарлăх,
Кулленхи ĕçпе вăл çитĕнет.

## ПУЛАССИ

Çутă Коммунизм — ешерен калча,
Хăрнă хăмăл — кивĕ мул тĕнчи,
Унăн вил тăпри çине шалча
Кĕçех çапса лартĕ ĕç ачи.

## ВĂРÇĂ

Мул хуçишĕн вăрçă — пысăк тупăш,
Вăл пуйма вĕреннĕ юнпала.
Ĕçлĕ халăха çеç хĕçпе тупă
Ĕмĕрне те ырă тĕс паман.

## ИРТНĔ КУНСЕМ ПИРКИ

Уссăр иртсе кайнă кунсене
Çавăрса килесчĕ каялла,
Пĕлĕттĕм мĕнле пулмаллине,
Хама хам эп илĕттĕм алла.

## ЙĂПАР

Канăçа вĕреннĕ Йăпара
Йăвара выртмашкăн япăх мар,
Çавăнпа та пулĕ йăваран
Йыш çине сахал тухать Йăпар.

## ЙĂПĂЛТИ

Йăпăлти этем пуплет йăвашшăн,
Чĕлхипе сĕрет пĕр вĕçĕм çу,
Пуçлăх чĕрине йăва хывасшăн,
Çăмăлпа тупасшăн ăнăçу.

## ĂСЛĂХПА ĂСТАЛĂХ

### ĂС

Пуҫри ăс пулсассăн май —
Пурăнмашкăн пит самай,
Пуҫри ăс пулсассăн урлă —
Пурнăҫа пăсать хĕн – хурлăх.

### ĂС ПИРКИ

Ăс пухма ан пул кахал —
Ăсли ҫапла хушать.
Ҫĕнетсе пыман ăс – хал
Куллен кунах йăшать.

### ĂСТАЛĂХ

Курка тытса ăсмалăх
Ҫĕрте выртмасть ăсталăх,
Ăса ĕҫре туптатăн —
Ăсталăх та тупатăн.

### ĂС ТАТА КУҪ

Ăс — ертсе пыран ҫулпуҫ,
Аташмастăн ăс пулсан,
Ҫул тупаймĕ чакăр куҫ
Витĕр ăслă пулмасан.

# ЁÇПЕ ЁÇЧЕНЛЁХ

## ЁÇ ЧĂНЛĂХЁ

Хёрÿ ёçе пула
Ăсталăх çуралать.
Ăсталăха пула
Ăс – хакăл çуталать.

## ТИВЁÇЛЁХ

Чуну пулсан хастар —
Хёрÿ ёçрен ан тар,
Таран пулсан ёçрен —
Тухатăн тивёçрен.

## ЁÇРИ СĂПАЙЛĂХ

Ху ёçне ху ырласа
Хулăм саслăн ан кёрле,
Ёçне ту вăйна хурса,
Шăппăн çеç йышпа пёрле.

## ТУЙĂМЛĂХ

Чёрере пур пулсан ырă туйăм —
Эсё халăх чунне çывăх туйăн.
Туйăму сан пулсан çăл пек тарăн —
Халăха ёçÿпе савăнтарăн.

## ВУНӐ ПӐРНЕ

Аллунта санӑн вунӑ пӳрне —
Вуннӑшне те ӗҫе хӑнӑхтар.
Вунӑ йыш пулӑшсан пӗр – пӗрне,
Хуҫине — иксӗлми пархатар.

## ЫЛТӐН АЛӐ

Ыр ҫын ӗҫпе тӑванлӑ,
Вӑл ӗҫшӗн ӑнтӑлать:
Ытарлӑ ылтӑн алӑ
Ӗҫе те ылттӑнлать.

## МАСШТАБ

Сӑмах ан ту вӗҫрен —
Умри ӗҫе мӑшта.
Кашни кунхи ӗҫрен
Килсе тухать масштаб.

## АЙӐП ПИРКИ

Пӗр пулнӑ айӑпа
Хырса тӑкаймӑн хӑйӑпа,
Касса вакламӑн ҫут хӗҫпе,
Сирме пултарӑн ҫеҫ ӗҫпе.

## ӖҪ КЕРМЕНӖ

Аслӑ ҫутҫанталӑк — ӗҫ керменӗ,
Ҫав ҫуртра юсатпӑр пурнӑҫа.
Вӑй хурса хастарлӑ ӗҫлекенӗн
Чыслӑхӗ ҫухалмӗ нихӑҫан.

## ВУНĂ ПАТТĂР

Вĕри юн тапнă чух чĕрере,
Вунă паттăр пўрне сывă чух —
Улăп эсĕ çак çут тĕнчере,
Санран вăйлă хăват урăх çук

## ЁÇ ВĂХĂЧĔ

Вăхăтра туптас пулать хĕçе,
Вăхăтра тăвас пулать ĕçе,
Вăхăтра туса пыман ĕçрен
Тĕк тухса пырать вĕçрен.

## ЁÇЛĔ ТАЛĂК

Ёç лаççи — ытарлă çут çанталăк,
Чĕрĕ пурнăç — ĕçлĕхпе тăван.
Пурнăçа пилленĕ ĕçлĕ талăк
Юмахри асамлăхпа пĕр тан.

## ПĔЛЕЙМĔН ТУПСĂМНЕ

Пĕлтерĕш шыракан
Пĕлмесĕр каламан:
Пур çывăх тусăнне
Пĕлеймĕн тупсăмне.

## САЛАМПИ

***О. В. Прокопьевăна***

Салампи — саламлă ят,
Ырă туйăм — ăшă саламра.
Туйăма çĕклен таса хăват
Яланах упрантăрччĕ санра.

## САНĂН КУÇУСЕМ

Куçусем сан тинĕс пекех тарăн
Туйăмлăх хăватлă пулнăран,
Эс анчах мана çăлма пултарăн
Çулăмра çунса кĕл пуласран.

## ÇĔНĔРЕН ТУС ТУМА

Кивĕ туса çухатма
Анаслу пек ансат,
Çĕнĕрен тус тума
Калама çук асап.

## ÇЫВĂХ ТĂВАН

Йăнăшсем тăвассинчен
Кам сана упрать ялан,
Çав пулать те çĕр çинче
Чуна çывăх ыр тăван.

## ЮРАТУ ХĂВАЧĔ

Пĕчĕк юрату вăл — пĕчĕк çулăм,
Çил вĕрсен — сӳнсе кăна ларать;
Пысăк юрату — хăватлă туйăм,
Çил ăна чĕртсе анчах ярать.

## ЮРАТУ ЮРРИ

Юп кӳрен телейлĕхĕн турамĕ —
Юрату юрри,
Юрă юрламасăр пултараймĕ
Юрламашкăн хал пурри.

## ЮРĂÇ

Чаплă юрăç пулас кайăк
Кĕвĕлет çăмартарах.
Ватăлса сас хытнă майăн
Юрлама йывăртарах.

## ЯНРАК

Янра, Янрак!
Янрас ăсталăх пур санра!
Ман йăла: кашни тăван киле
Шăппăн çеç пырса кĕрес килет.

## ЯТĂМ — МИКУЛАЙ

Ятпала чĕнсен эп — Микулай,
Тĕнчере ман пек ятли нумай.
Халăхшăн хурсан вăй – халăма
Уйрăм аса илĕç ятăма.

## УСАЛА ПАЙЛАНИ
*/шÿт/*

Пĕр усала икке
Пайларăмăр иккен:
Сана лекрĕ — инкек,
Мана лекрĕ — синкек.

## ХУШНĂ ПЕК ПУРНАКАН

— Эс балет е опера курма
Кайкалатăн – и хĕлле?
— Çÿлтен ун пек çĕрте пулма
Хушу килнĕ – им, элле?

## ЧЕЙ ÇУРТНЕ КĔРСЕН

Чей çуртне кĕрен те чей ĕçме,
Чей çукран пăхатăн хирĕçме.
Ăнсăртран куран та «çуттине»,
Ăнланса илетĕн ыттине.

## ЮРАТУ ХĂВАТЛĂ

— Еплерех савса пурнатăн
Ват çынна эс, Матĕрне?
— Ах, ытла та юрататăп...
Унăн пысăк хваттерне!

## ЯПĂХ ЛЕКТОР

Япăх лектор йыш çинче
Каппайса пуçне ухать.
Ăслăх мар, çăварĕнчен
Тăрă шыв анчах юхать.

## ТУС

Тус вăл — хаклă мул, тупра,
Тус пур чух ăна упра.
Тус тупман пулсан — шыра,
Пĕччен çын часах ырать.

# ЭТЕМЛĔХ ЭЛЕМĔ

## АР

Пурăнма çуралнă ар
Çĕрĕк чунлă пулма тивĕç мар:
Çынлăхпа çĕнтерсе вилĕме
Ыр ятпа кĕмелле ӳлĕме.

## ĔÇЛĔХ

Хăвна ху ан çухат йӳтесе,
Халăха ĕçлĕхпе савăнтар:
Халăхран та ыр тĕслĕх тĕсе,
Халăха та ыр тĕслĕх кăтарт.

## ХĔМ

Ĕçлеме вăй патăр хĕм.
Чĕрере хĕм тени пулмасан,
Кĕтме питех те хĕн
Ĕçре хастарлăх пуласса.

## ЭТЕМ

Чи асамлă вăйсен хăватне
«Этем» теççĕ çавра çĕр çинче.
Çавăнпа та этемлĕх ятне
Ĕмĕртен хисеплет çут тĕнче.

## АВАЛХИ СĂМАХ

Авалтан халăхра сăмах пур:
Ачаран çын тума вăйна хур.
Йывăçа авмасан хулă чух
Каярах авасси пулас çук.

## ПАТТĂРСЕМ

Паттăрсем хĕнлĕхрен хăрамаççĕ,
Вĕсенче иксĕлми вăй – хăват,
Пулас куншăн вĕсем хăвараççĕ
Нихăçан та вилми ырă ят.

## ÇŸÇ ШУРАЛНĂ МАЙ

Шур тĕсе ырлаççĕ ĕлĕкрен,
Шурă тĕс — тасалăх, ăнăçу,
Ватăлса çÿçе чап кĕнĕрен
Кулянма нимле те сулăм çук.

## ХАКЛАВ

Ăспала ăсталăха кура
Çынсем хаклаççĕ пĕр – пĕрне:
Пĕрне калаççĕ: — «шур курак»,
«Кăйкăр» — тееççĕ теприне.

## ЧĂНЛĂХА ПĔЛТЕРМЕ

Кирлĕ мар темĕн чухлĕ сăмах
Чăнлăха пĕлтерме халăха, —
Ытлашши сăмахпа кăлăхах
Çÿпĕлетĕн таса чăнлăха.

## ÇУЛ

Пурнăç йĕрĕнчен пĕр пăрăнмасăр
Аслă çула тухтăр утма çул,
Халăх йышĕпе пĕрле пулмасăр
Пĕчченшерĕн пурнăç тума çук.

## ÇУЛÇĂ

Аллăма тытап – и ешĕл çулçă —
Юратса сăнатăп илемне:
Çулçăпа ялан тĕрленĕ чулçă
Пархатарлă пурнăç эрешне.

## ТЕЛЕЙ ПИЧЕВЛĔ

Телейпе пичевлĕ утнă чух
Ун çинчен пачах та асăм çук,
Хамăртан хăпса кайсан кăна
Асилетпĕр вĕçĕмсĕр ăна.

## ТИВĔÇЛĔ ЫЙТУ

Кăкăрна хĕстерет тарăху:
— Пурнăç, — тетĕн, — усал, ют ама!..
Мĕнех турăн вара эсĕ ху
Пурнăçа çĕнетсе юсама?!

## ТУЛĂХ ПУРНĂÇ

Кам асаплăх тӳссе курнă,
Кам ĕçпе тус ачаран,
Вăл пĕлет: телейлĕ пурнăç
Хунамасть пуш сăмахран.

## ПУРНĂÇ

Пурнăç панă пире пурăнмашкăн,
Пурăнмашкăн панă пурнăçа,
Виçерен тухса питех ан ашкăн —
Пурнăçăн хўри час пăрнăçать.

## ПУРНĂÇА ЮРАТСАН

Уйлама пĕлмелле питĕ тарăн,
Пĕлмелле пурнăçа юратма,
Пурнăçа юратсан çеç пултарăн
Иксĕлми вăй—хăват çуратма.

## ПУРНĂÇ ВĂЙĂ МАР

Пурнан пурнăç ача вăййи мар,
Май килмест вĕçĕмрен выляма:
Пурнăçа малалла кустарма
Хăвăнах тумалла кустăрма.

## ПУРНĂÇ САККУНĔ

Хытă пулнă ĕмĕрне
Пурнăçăн саккунĕ:
Çапкаланчăк çынсене
Вăл инкек çеç кўнĕ.

## ПУРНĂÇ ÇУЛĔ

Çатма пек такăр мар пурнăç çулĕ,
Çăмăл мар пурнăçпа тан утма:
Типсе ларĕ куçри чĕр куççулĕ
Пĕлмесессĕн чипер пурăнма.

## ПУРНĂÇ ЮЛТАШНЕ

*Еляна*

Санпала паллашнă хыççăн
Телей анчĕ ман тĕле.
Эп ăнлантăм: хура куçăм,
Эсĕ пултăн çав телей.

## ПУРНĂÇ ХАКĔ

Пурнăç хаклă çакă çĕр çинче,
Пурнăç хаклă ылттăн купинчен,
Тем пирки ун хаклăхĕ çинчен
Асилетпĕр пурнăç вĕçĕнче.

## ПУРНĂÇ ЧАПЛĂХĔ

Тĕнче пуян, чечен,
Тĕнче тулли илем...
Пурнан пулсан пĕччен
Сана пурте кичем.

## ПУРНĂÇ ЮРРИ

Çуккине ту çурмалла,
Пуррине пайла пĕрле —
Пурнăç кайĕ малалла,
Хĕвел ӳкĕ тĕпеле.

## ÇАМРĂК ĔМĔР

Çамрăк ĕмĕр — пурнăçăн пĕр пайĕ
Ыткăнса килет мăн çулпала,
Ансăр сукмакпа вăл иртсе кайĕ
Туслă пулмасассăн ăспала.

# ТУЙĂМ ТУРТИСЕМ

## ЮТ

Ютпа пĕрле ан ут —
Ютран куратăн мут,*
Утан пулсан пĕрле —
Ун кăмăлне йĕрле.

## ТĂВАН КИРЛЕХ

Пĕччен çĕ пĕр вĕçрен
Мĕнех тытса тăван?
Кирек мĕнле ĕçре
Кирлех иккен тăван.

## ТУСЛĂХ НИКĔСĔ

Сав тусна эс туймалла,
Унпа ĕмĕр ĕмĕрле:
Çуккине ту çурмалла,
Пуррине пайла пĕрле.

## ТУСЛĂХА МĔН ÇИТЕТ?

Тату пулсассăн ăслăхпа
Ăнланма пултарăн эс:
Этем хăватлă туслăхпа,
Туслăха мĕскер çитет?

* ***Мут — икĕ питлĕ çын.***

## ТУСЛĂХ ТАТА ТУНСĂХ

Чун хĕвелĕ пултăр туслăх,
Хисепле ыр туссене:
Эс вилес – тĕк пултăр тунсăх
Сана çывăх çынсене.

## ЮРАТУ — ЧĔРЕ ИЛЕМĔ

Юрату — чĕре илемĕ,
Чун тасалăхне иленĕ;
Юрату — телей турамĕ,
Иртĕхме унпа юрамĕ.

## ПĔРЛЕШŸ

Тĕс парĕ пĕрлешӳ —
Пулсассăн килĕшӳ,
Çемьеллĕ тĕркешӳ
Ытла та япăх шӳт.

## АВЛАНУ ПИРКИ

Мĕскер вăл авлану?
Пит кирлĕ ăнлану.
Пит кирлĕ ăнлану
Ан пултăр айлану.

## АН ХĔРЕТ

Сар пикен илемлĕ сăн – питне
Вĕчĕхпе сăлтавсăр ан хĕрет,
Хурăн та, сиен тусан хайне,
Çутă куççульне тăкса йĕрет.

## ЁÇПЕ ЮРАТУ

Кам ёçе чунтан савма пултарĕ,
Вăл пултарĕ çирĕп юратма:
Çамкаран юхан ёçченлĕх тарĕ
Туслăха нихçан та хуратман.

## ИЛЕМПИ

***чăваш хĕрне***

Ят таврашĕ питĕ тĕрлĕрен,
Эп пĕрне саватăп чĕререн:
Чăвашсем юп курнă Илемпи
Маншăн калама çук илемли.

## МА ЙĔРЕН?

Туслă çын хăвна пăрахнăран
Макăрса эс чунна пусаран.
Ма йĕрен? Куççулĕ тăкнăран
Кантăр тăваймастăн пусаран.

## ТĂШМАН УМĔНЧЕ

Тăшманпа сăмах вакла хастаррăн,
Унăн умĕнче чунна хытар:
Çĕçĕ аврине ху тыт хатаррăн,
Çĕçĕ çивчĕшне ăна тыттар.

## ТИЛĔ

Чĕрĕпе шыва ярать те Тилĕ,
Чĕрĕп сÿтĕлсен — тытса çиет.
Тилĕ пек чее çын чуна илĕ,
Тилĕ меслетне вăл та пĕлет.

## ТУСЛĂХ

Туслăха ыр халлĕн упрамашкăн
Чĕрере çунса тăрсан кăвар,
Çывăх тус патне çитсе курмашкăн
Нимĕнле инçетлĕх тавра мар.

## ÇЫРСА ХУНИ

Сăвăри кашни сăмахшăн
Кирлĕ, теççĕ, чун ăшши.
Çынна юрăхлă çырмашкăн
Чун ăшши ман çитĕ–ши?

## ТАЛАНТ

Ют çĕрте талант хăрах çунатлă,
Ют çĕрте талант типсе хăрать.
Вăл Тăван çĕрте анчах хăватлăн
Сарăлса ўсмешкĕн пултарать.

## ТĂВАН ЧĔЛХЕ

Анне чĕлхи — тăван чĕлхе,
Тăван чĕлхе — шалти хĕлхем,
Шалти хĕлхем вăл — чун ăшши.
Чун ăшши пулать–и ытлашши?

## ХАЛТУРА

Ах, турă,
Мĕн–ши вăл халтура?
Япăх çыраканшăн — çывăх турă,
Вулакан çынсемшĕн — макулатура.

## ШĂПЧĂК

Куçласа пăхан та шăпчăка,
Курăнать ытла та пĕчĕк пек:
Пĕчĕк чун пулсан та шăплăха
Янратать хăватлă сассипе.

## ЧУН ИЛЕМĔ

Çынлăха çĕклеймĕ сăн илемĕ,
Сăн илемĕ çукшăн пит ан çун.
Чăн малтан сан пултăр чун илемĕ,
Унсăран этем пулма май çук.

## ЫРĂ ЧĔРЕ

Хурапа шурра курсан çеç туйăн
Çывăх çыннăн ырă чĕрине:
Пуç çине ӳксессĕн йывăр туйăм,
Хăй çине илет вăл çуррине.

## ЮМАН

Юмана юратнă чăвашсем,
Чăвашсем юп курнă юмана.
— Юман пек тĕреклĕ пул! — тесе
«Юман» ятлă хунă арçынна.

## ЯТĂМ МАН — МИККУЛЬ

Вырăсла чĕнсен эп — Николай,
Чăвашла чĕнес пулсан — Миккуль.
Халăхра ăс—хакăл пухнă май
Хамăн та çырма хал кĕчĕ пуль.

## САХАЛ

Питĕ йышлă сăмах ăстисем,
Çыракан нумаййи пит паха,
Асăмра юлмалли сăвăсем
Пурпĕрех калама çук сахал.

## СĂВĂРМАН СĂВĂСЕМ

Сăвăрман пуш сăвăсем
Вулама пуçлан кăна —
Мăка вĕçлĕ сăнăсем
Тăрăнаççĕ хăлхана.

## СĂВĂÇА

Сăвă тухтăр вутлă чĕре витĕр,
Чăннипе сăнлатăр пурнăçа,
Ун чухне тинех вăл чуна витĕ,
Нихăçан та тухмĕ манăçа.

## СĂВĂÇ КУÇĔ

Сăмах ăстин сăнавлă куçĕ
Илем хыççăн çĕнĕ илем уçĕ,
Чунпа уçнă çĕнĕлĕх çине
Çĕнĕлле пăхтарĕ çынсене.

## САВĂ ÇЫРАССИ

Вĕçĕмрен сăмах алла та сăвăр,
Вĕçĕмрен шыра чăн тĕрĕс çул,
Унсăрăн çыраймăн лайăх сăвă,
Унсăрăн хăватлă çырма çук.

## ШУХĂШ ТАТА СĂМАХ

Пуçра çуралнă шухăш —
Алри асамлă ухă,
Çунатлă сăмахсем —
Çав ухă йĕпписем.

## УЛТАВ

Ултава тăван – и турă,
Сутан – и совĕçне,
Хака ларан халтура
Йӳнетĕ сан ĕçне.

## ПОЭЗИ

Поэзи тенĕ япала
Çӳретӳр сумлă ятпала,
Вăл чăнлăх хăватне
Çитертĕр чун патне.

## ЧĂНЛĂХА ПĔЛТЕРМЕ

Пĕлтермешкĕн таса чăнлăха
Кирлех мар темĕн чухлĕ сăмах;
Ытлашши вакласа сăмаха
Чăнлăха çӳпĕлен кăлăхах.

## КĔСКЕЛĔХ

Кĕскелĕхе хисеп туни —
Сăмах тĕшне сума суни,
Çук шухăша юри тăсни —
Чĕлхе илемлĕхне пăсни.

## КĔÇĔНЕ АН ЮЛ!

Парнас кĕрекинче
Пулас килмест – тĕк кĕçĕнни —
Эс пыр Ăсталăх пусĕнче,
Куллен кунах шыра çĕнни.

## ЫРЛАССИПЕ ХУРЛАССИ

Пĕрчине курмасăр тыррăн
Хывăхне çеç ан кусла,
Ырлама пĕлмесĕр ыррăн
Хурлама та ан пусла.

## ÇЫРАКАНПА ВУЛАКАН

Ларса çыран – и сăвă – юрă —
Шур хут çине тырпул акан...
— Кун пек мула вырма та ырă! —
Тесе калатăр вулакан.

## АКĂШ ЮРРИ

Сарăлса вăй илнĕ май ăсталăх
Вĕçĕмрен суйлатăн ыррине —
Юрласа парасшăн асăнмалăх
Ытарма çук акăш юррине.

## АСАМАТ

Сăвă çырнă майăн асăма
Килсе тухрĕ капăр асамат:
Асаматăн капăр илемне
Куçарасчĕ сăвă йĕркине.

## МА ТĔЛĔНЕС?

Сăвăра нумай пулсан кикен,
Шăйрăкпа тулсан кашни кĕтес —
Çырнине тытса вулас текен
Çук пирки ма питĕ тĕлĕнес?

## МĔН-ШИ ЮРĂ?

Юрă — пурнăç сăн-сăпачĕ,
Юрă — пурнăç хыпарçи,
Юрă — туйăмлăх çуначĕ,
Юрă — савăнăç хуçи.

## ПАРНАС ПИРКИ

Пуш сăмах хуххи кăна
Сăвăрса аллан пулсассăн,
Парнасри хисеплĕ ушкăна
Лекесси çинчен ан асăн.

## ЮРĂ

Çав тери çăл шывĕ чуна ырă,
Çав тери ăша вăл кантарать.
Сив çăлри шывпа тан лайăх юрă,
Чунăма асамлă вăй парать.

## ПОЭЗИ

Поэзи тенĕ япала
Çӳретĕр сумлă ятпала, —
Ыр сăмахăн ырă хăватне
Вăл çитертĕр çын чĕри патне.

## ПОЭЗИ УРХАМАХĔ

Хăй çине айван этем ларсан,
Тарăхать поэзи урхамахĕ.
Вăл ăна, вăраххăн кустарса,
Манăçлăх хирне кайса пăрахĕ.

## ТĂВАН ЧĔЛХЕ

Сывлăшпа пĕрех тăван чĕлхе,
Сывлăхпа пĕрех тăван чĕлхе.
Сывлăшпала сывлăх пек чĕлхе
Сапăр çын пулма парать хĕлхем.

## ĂСЛĂ СĂМАХ

Сăнама пултарнă хăвăрах:
Ăслă сăмаха çын юрататъ.
Ăсласа каланă ыр сăмах
Чĕрере ыр туйăм çуратать.

## ĂСТАЛĂХПА ТАЛАНТ

Ăсталăхпа Талант
Иккĕш тунă ант:
Камра пур тăрăшу —
Çавна çеç пулăшу.

# ПУРНĂÇ ЧĂНЛĂХĔ

## ПУРНĂÇ ХАКĔ

Пурнăç хаклă çакă çĕр çинче,
Пурнăç хаклă ылттăн çӳпçинчен.
Тем пирки ун хаклăхĕ çинчен
Асилетпĕр ĕмĕр вĕçĕнче.

## ХАЛĂХ ХĂВАЧĔ

Яланхинчен тата нумай хăватлă
Пулĕ сан юратнă халăху —
Эсĕ ху пулсассăн ырă ятлă,
Чĕр хăват пулсассăн эсĕ ху.

## УХМАХ

Ăнсăртран илемлĕ, ыр сăмах
Калама пултарĕ, тен, ухмах.
Ăнсăртран каланă пĕр сăмах
Ухмаха тăваймĕ ăслăрах.

## ӲСĔМ

Ăс акса тумалăх тӳсĕм
Пур пулсассăн çумăнта,
Ӳсĕм хыççăн çĕнĕ ӳсĕм
Карталанĕ умăнта.

## ТĔПЧЕВ ÇИНЧЕН

Пĕлӳ — тĕпчев уççи,
Вĕреннĕ çын — хуçи,
Тĕпчев ани — тĕнче,
Ăс — хал ăна тĕпчет.

## ÇЫВĂХ ТУС

Çывăх тус санпа хавассăн кулĕ,
Санпала хурланĕ чĕререн,
Хĕнлĕхре вăл саншăн хӳтлĕх пулĕ,
Чун ăшши вăл пулĕ сивĕре.

## ÇЫРСА ХУНИ

Темех мар савнă тус кусĕнче
Юратуллă çын пек курăнма,
Хĕнтерех ĕмĕре вĕсличчен
Хĕвелпе уйăх пек пурăнма.

## ЫРĂПА УСАЛ

Ырă çыншăн Çĕршывра
Пур çĕрте те — тăван кил,
Усал çын тĕлне вара
Тăван килĕ те — пускил.

## МĔЛКЕ АН ПУЛ

Сивлек мĕлкен чун çук,
Мĕлке çех пуличчен,
Этем пулса пĕр çул
Пурнас те çĕр çинче.

## ЙĂНĂШУ

Пĕр сăлтавсăр ан пӳрлен,
Йăнăшсем пулсан — тӳрлен.
Пытаран—тăк йăнăшна —
Усал чир илен ăшна.

## ÇУЛСЕМ ПИРКИ

Пурнăçра çулсем нумай,
Суя çулпа ан чуп.
Ӳссе ăс—хал пуçтарнă май
Эс хăвăн çулна туп.

## ЙĔР

Хисеп ту ӳсĕм,
Лапралăхра ан çĕр.
Ыр тĕслĕх тĕсеме
Хăвар ху хыççăн йĕр.

## ПАЙТА

Çĕршывăн пӳлминчен
Курас тесен пайта,
Çĕршывăн ĕçĕнче
Пултăрччĕ сан пай та.

# УÇЛĂХПА УÇĂМЛĂХ

## ЭТЕМЛĔХ ĂСĔ

Сăпкаччĕ тин çеç Çĕр – планета,
Ача тетчĕç тин çеç – ха Ăса —
Вăйпитти этем ăсĕ ракета
Паян кун ăсатать космоса.

## 3–МĔШ КОСМОНАВТ

Çĕр çинче те ĕçсем лайăх,
Тӳпере те ĕç ăнать:
Çĕршыв ҫапĕ — Николаев
Çăлтăр витĕр курăнать.

## ÇĂЛТĂР ПАТТĂРĔСЕМ

Тĕлĕнсе халтан та кайăн –
Космосра паян ик йĕкĕт:
Николаев — ăмăрткайăк,
Тепĕри — Попович — пĕркĕт.*

## «КОСМОС–8»

Чарма çук çунатланнă Ăса:
«Космос – 8» вĕçет Космоса.

---

*Пĕркĕт — кайăк ячĕ. Вырăсла "беркут" теççĕ.

# ВĔРЕНӲ ÇИМĔÇĔ — ПĔЛӲ ПИЛЛĔХĔ

## ПИЛ

Пурне те пайăр пил:
Вĕрен те пĕлӳ ил,
Вĕрен те пилĕк ав,
Хĕрӳ ĕçре — мухтав.

## УССĂР АН ВЫРТТАР!

Пĕлӳ вăл — сăсăл мар,
Пӳлме тĕпне ан вар!—
Ĕçре пулман тавар
Пултарĕ пăсăлма.

## КУНÇУЛ ТАТА ПĔЛӲ

Кунçул вăл — тӳсĕм тинĕсĕ,
Алхасĕ те путарĕ,
Пĕлӳ анчах пĕр тикĕссĕн
Çĕнсе ишме вăй парĕ.

## ПĔЛӲ ПУЛСАН...

Куллен ăс — хал пуçтар,
Çурма çулта ан чак!
Пĕлӳ пулсан анчах
Этем чĕри хастар.

## АСĂРХАТТАРНИ

Хăмлан йӳҫек тарне
Питех ан тив!
Ăс – хакăл нектарне
Савсах астив!

## ТĔПЧЕВ

Пĕлӳ — тĕпчев уҫҫи,
Вĕреннĕ ҫын — хуҫи,
Тĕпчев ани — тĕнче,
Тĕпрен ăна тĕпче!

## ĂС–ХАЛ АНИ

Ăс – хал ани пит сарлака,
Кĕтни – каҫалăк вĕҫĕнче.
Тĕпрен аллас пулсан ăна
Вĕҫленĕ Ăслăх тӳпинче.

## ĔҪЕ КУРА ХИСЕП

Уҫма пĕлсен ҫĕн алăк
Наука ҫуртĕнче —
Алпа туман чăн палăк
Хывтарăн ҫĕр ҫинче.

## ҪУТ ҪАНТАЛĂК

Ҫĕнелет пĕр вĕҫĕм ҫут ҫанталăк,
Вĕҫĕмсĕр илем вăл темелле,
Кашни ир уҫатăн ҫĕнĕ алăк,
Киввинех куратăн ҫĕнĕлле.

## ИНÇЕТ

Умри капăр инçет
Тулли илемлĕхпе çиçет.
Çав тулли илемлĕх ĕмĕртен
Этем чунне асамлăн илĕртет.

## ĔÇПЕ ИЛЕМ

Çут тĕнчен таса илемĕ
Тата хитре, тата илемлĕ,
Тата пуян пулма пултарĕ
Ун çине ўксессĕн ĕçлĕх тарĕ.

## АСАМЛĂ ÇУРКУННЕ

Çурхи тумла вĕçрен тумлать...
Калăн çав: асамлă Çуркунне
Çĕр – аннен пăрланнă чĕрине
Вилĕмрен чĕртес тесе юмлать.

## КĔТСЕ ИЛНИ

Шăнкăр – шăнкăр килсе çитрĕ çурт умне
Шăнкăрчă юррилĕ çуркунне.
Эп ăна, çыравçă йăлипе,
Кĕтсе илтĕм сăвă çыххипе.

## ЧĂНЛĂХ ÇУТИ

Çутă чăнлăх — пурăнăç хĕвелĕ,
Çутатать вăл пирĕн ĕмĕре.
Ун çутисĕр сарă кун тĕтреллĕ,
Çурхи ăшă кун та сивĕрех.

## ЧЕЧЕК

Ыр чечек хитрелӗхӗ ҫинчен
Мухтанма пӗлмест йыш умӗнче,
Пурпӗрех илемлӗ ыр чечек
Пуранать кашни ҫын асӗнче.

## ЧӖЛХЕ

Ырӑ та, усал та тӗнчере
Юнашар вырташшӗ чӗлхере,
Ҫавӑнпа, тен, хӑтсӑр этемсен
Яланах ик юплӗ чӗлхисем.

## ЧУН ХӖВЕЛӖ

Хӗвел пирӗн хӗве
Вӗри туйӑм хӗвет.
Вӗри туйӑм ӑшши
Чун хӗвелӗ мар – ши?

## ШУХӐШ

Ҫывӑрса ан вырттӑр шухӑш,
Вӑл ялан вылянтӑр,
Вӑл ялан туптантӑр —
Ун чухне вӑл парӗ тупӑш.

## УССИ ҪУК

Теплерен инкек килсе тухсассӑн,
Усси ҫук пулсан та пурпӗрех,
Вӗҫӗмрен сывлатпӑр ассӑн – ассӑн —
Кӗскететпӗр хамӑр ӗмӗре.

## ЎКЁНСЕ УЙЛАНИ

Уссăр иртсе кайнă кунсене
Çавăрса килесчĕ каялла,
Пĕлĕттĕм мĕнле пулмаллине,
Хама хам эп илĕттĕм алла.

## ХАЛСĂР ВАТЛĂХ

Пурăнма пухатăн çес хăватлăх,
Ăс кĕрсе çитет çес тăнлава,
Çывхарса килет те халсăр ватлăх
Пушатма хушать тулли лава.

## ХУÇĂЛСАН

Хăвна ху тытмасассăн ĕлккен
Хулă пек хуçăлан та иккен.
Хулă пек хуçăлсан çурмаран
Хăлат пек вĕçме çук урăхран.

## ХĂНА

Тĕл пулсассăн таса юрату
Эс ăна ыр сунса хапăл ту,
Ыр сунса йышăнсассăн кăна
Вăл ĕмĕрлĕх хăна.

## ЧУН ИЛЕМĔ

Эх, сарă хĕр, сарă хĕр,
Сăн хакне çес ан ăмсан,
Сăн илемĕ сарăхĕ
Чун илемĕ пулмасан.

## ЧУН ПЕК ТУС

Тĕнчере чун савнă тус
Тăванпа пĕр яланах:
Ту пек хӳтлĕх çывăх тус,
Туссăр юлнă çын — чăлах.

## ЮРАТУ

Юрату — чĕр çын илемĕ,
Пăрлă чун ăна пĕлеймĕ,
Юрату — телей турамĕ,
Иртĕхме унпа юрамĕ.

## ЮРАТУПА ЫРАТУ

Чĕрере ыр туйăм вăрансассăн
Хĕвел пек хĕмлентĕр юрату,
Юрату кăварĕ тамалсассăн
Чĕрене çунтарĕ ырату.

## ТĂВАН ÇĔРШЫВ

Тăван çĕр тăварлă, чуна ырă,
Калама çук сиплĕ ун шăрши.
Çуралса кун курнă çĕр пек ырăн
Çĕр çинче тата ăçта пур — ши?

## ТĂВАН ÇĔРШЫВ ТĂВАРĔ

Тăван çĕршывăн тăварне
Тутаннă çын манмасть,
Тăван вучахăн кăварне
Сӳнсе ларма памасть.

## АН ВАСКА

Тăван çĕршыв пыл мар тесе
Ют çĕре ан васка йӳтесе.
Çак çĕрте тупăнман ыр телей
Ют çĕрте çăвас çук сан тĕле!

## СУМЛĂХ

Тăван халăха юрас – тăк
Савăнтар ыр ĕçӳпе,
Унсăр сумлă пулаймастăн,
Кĕрейместĕн хисепе.

## ÇАМРĂК ЧУХ

Эпĕ хам та пулса курнă,
Эпĕ хам та пулнă шух —
Мĕнле йывăр ĕç те, пиçнĕ çарăк
Çиесси пек, çăмăл çамрăк чух.

## ÇĔР СУРАНĔ

Чун – чĕре тепĕр чух ыратать:
Сурансем пит нумай çĕр – аннен.
Ун сăваплă, таса суранне
Ĕç анчах сиплеме пултарать.

## ТАВЛĂХ

Халăха кирлĕ пек ĕç тăватăн —
Чĕререн савăнатăн,
Кун иртсессĕн, ĕçӳ ăнмасассăн,
Чăтма çук тарăхатăн.

## ТЕЛЕЙ — ЁÇРЕ

Ан шыра асамлăх çĕррине,
Ан ват пуçна пуш ыйтупа:
Этем хăйне мĕн кирлине
Хĕрӳ ёçре анчах тупать.

## ТУСЛĂХ САККУНĔ

Тусран ан юл —
Туспа тан ут,
Тусран ан кул,
Тусна ан сут!

## ТУСЛĂХ ТУЙĂМĔ

Чун хĕвелĕ пултăр туслăх,
Хисепле ыр туссене:
Эс çӳкран илентĕр туслăх
Сана çывăх çынсене.

## ТУСПА ТĂВАН

Пĕчченçĕ пĕр вĕçрен
Мĕнех тытса тăван?
Кирек мĕнле ёçре
Кирлех туспа тăван.

## ИКĔ ЕНЛĔ КРИТИК

Мăннисем валли ун пур
Ыр сăмах е каламбур,
Çамрăксемшĕн те çук мар
Çапса хуçан чукмар.

## ЙЁРКЕ

Пурнăç тытăмне пурте пĕлеççĕ,
Арканми йĕрке пур тĕнчере:
Пуçтахсем сĕрлеççĕ те сÿнеççĕ,
Пушкинсем юлаççĕ ĕмĕрне.

## КУÇАРУ ПИРКИ

Куçарнине пачах
Тиркевлĕх çук, анчах...
Начар пулсассăн куçару —
Ан пултăр каçару.

## ПАЯНХИ СĂМАХ

Паян эпир калатпăр:
— Вăтамлăхран вăтан!
Ĕçре пул хурçă паттăр!
Ут вăхăтпа пĕр тан!

## КУЛĂШ ĂСТИНЕ

Куç куран çитменлĕхрен
Кулас килет пулсассăн — кул,
Анчах ăсталăх çитменрен
Ял кулли пулса ан юл!

## ПОЭТ

Уй–хир кашлатăр тулăх тырăпа,
Тăрă шыв пиллетĕр таран пусă,
Поэт сăйлатăр сăвă–юрăпа,
Сăвă–юрăпа вăл кÿтĕр усă.

## ПУЛТӐР ХӐВӐН

Кирлӗ сӑмахсем пӗр вӗҫӗм сӑвӑр,
Ҫын йӗррипе анчах ан шӑвӑн.
Ан тив, ӗҫӳ сан — пӗр пӗчӗк сӑвӑ,
Анчах вӑл пултӑр хӑвӑн.

## ПУҪЛАМӐШӖ

Сӑмах тени — ӑс – хакӑл амӑшӗ,
Ӑслӑхпа ӑсталӑхӑн пуҫламӑшӗ.
Вӑл пултарнӑ пӗтӗм ӑслӑха,
Ҫавӑнпа хакласҫӗ ӑслӑ сӑмаха.

## ПУҪТАХСЕМ ПИРКИ

Пуш сӑмах павран пуҫтах чунсем
Чыслӑхпа мухтавшӑн ӑнтӑласҫӗ,
Ҫӑмарта сахал тӑван чӑхсем
Ҫавӑн пек пӗр вӗҫӗм кӑтӑкласҫӗ.

## ПУШКИНСЕМ

Ӗмӗрте пӗрре анчах килесҫӗ
Пултаруллӑ Пушкинсем —
Халӑхра вӗсем хӑват ҫӗклесҫӗ,
Ҫавӑнпа юласҫӗ ӗмӗре.

## ХӐЮЛӐХ

Пӗркенес пулсан та тигр тирӗ,
Ҫук пулсан хӑюлӑх чӗрере —
Алӑри хӗҫне тытаймӑн ҫирӗп,
Паттӑр ҫын пулаймӑн тӗнчере.

## ЧАКАК

— Чаклатсах эп, — тенӗ пӗр Чакак,—
Ӑнтарма пултарӑп пурнӑҫа!..
Пуш сӑмах хуть те мӗн чухлӗ ак —
Ӑс пӗрчи шӑтаймӗ нихӑҫан.

## ЧЕЧЕК

Куҫ илмест илемлӗ сар Чечек
Йӑл кулса пӑхан хӗвел ҫинчен.
Чечек те пӗлет пек хӑй ҫине
Кам савса ачашшӑн пӑхнине.

## ЧУЛ

Ҫурт умне сарма пуҫтартӑм чул —
Ҫӗрӗпе сурса ыратрӗ хул.
Ыратса курман пулсассӑн хул
Асӑмра юлатчӗ-ши ҫав чул?

## КӐРШӖ

Хуть хӑҫан та кирлӗ лайӑх кӳршӗ,
Кӳршӗ ҫук пулсан та пурнӑҫ мар.
Месерле ялта та кирлӗ кӳршӗ
Юп курса выртмашкӑн юнашар.

## ПӖРРЕМӖШ УТӐМ

Астӑватӑп эп пӗрремӗш утӑма.
Ыр Аннеҫӗм пулӑшрӗ ун чух.
Ҫӗкленсе ура ҫине тӑма
Пулӑшу аллисӗр утма ҫук.

## ПĔЧĔКÇĔ ШЫВСЕМ

Пĕчĕкçĕ шывсем пĕр юхăма тухсассăн
Çĕклесе ярaççĕ мăн шыва,
Халăхсем те, туслă йыш пулсассăн,
Чĕр хăват параççĕ Çĕршыва.

## МĔЛКЕ АН ПУЛ

Хăвна хăватсăр пек курса
Мĕлке ан пул çын кусĕнче:
Çынпа пĕр тан ыр çын пулса
Илемлĕ пурăн çĕр çинче.

## ТИРПЕЙЛĔХ

Çын умĕнче калассине
Малтан ăшра хакла:
Ăшра виççе хакланине
Тинех çынна кала.

## ÇУНАТ

Этемĕн ĕмĕт малалла,
Вăл чăнлăхшăн çунать,
Шăп çавăнпа ун пулмалла
Мала вĕçме хăват.

## ТУЙĂМ

Чĕрере хĕмленсен чĕрĕ туйăм,
Чĕр хăват пур пулсан чĕрере,
Пĕтĕм халăх ĕçне çывăх туйăн,
Хăтсăр туймăн хăвна тĕнчере.

## ПИЛСЁР ЧУН

Йёркене пăсакан пилсёр чун
Урмăшса çӳрекен упăтех:
Вăл, çынна пулăшу парас чух,
Ылханать ăшĕнче: — Кăн, пĕтех!..

## ХУРĂНПИ
*/легенда/*

Хĕл Мучипе капăр Çу пике
Хурăнпишĕн савнă чун пекех:
Хĕрне ашшĕ панă шупăрне,
Амăшĕ пилленĕ тутăрне.

## ПУСĂРА

Тинĕс пек ылттăн тырă пусси,
Пусăра вĕçĕмрен хум кусси.
Пин пучах хумханса пуç таять —
Ĕçчене ыр сунса тав тăвать.

## ЫЛТĂН ТЫРĂ

Пусăра ӳсекен ылтăн тырă
Ыр çынпа яланах пулнă ырă:
Кам хирте çурхи кун тар юхтарнă —
Кĕр çитсен вăл ăна савăнтарнă.

## ТУМЛАМ

Тумлам епле тумлать, сăна!
Тумлам çине тумлам — мăн шыв.
Ан тив, пулам тумлам кăна,
Манран юп куртăр çес Çĕршыв!

## ВĂХĂТ ПИРКИ

— Чарăнса тăр — ха, хăта! —
Тесе калаймăн вăхăта.
Апла пулсассăн, эсĕ ху
Вăхăтпа пĕр тан пыма вăй хур.

## ЛЕНИН — ПИРĔН ÇУРКУННЕ

Çурхи кун çуралнă аслă Ленин,
Çуркунне вăл килнĕ тĕнчене,
Çурхи ăшăпа вăл çирĕпленнĕ,
Çавăнпа вăл хăй те — Çуркунне.

## ЧĂНЛĂХ

Чăнлăха тытса чарма пулать,
Чăнлăха тытса тăма пулать,
Тĕрмене хупма пулать ăна...
Анчах тĕп тума май çук ăна!

## ЧĂНЛĂХ ÇУТИ

Çутă Чăнлăх — пурăнăç хĕвелĕ,
Çутатать вăл пирĕн ĕмĕре.
Ун çутисĕр сарă кун тĕтреллĕ,
Пăрлă тинĕсрен те сивĕрех.

## ОКТЯБРЬ

Çĕнĕ пурнăçăн утти
Хăват илчĕ тĕнчере,
Çут Октябрĕн ыр çутти
Маяк пулĕ ĕмĕрех.

## АМĂШНЕ МАНАКАН

Чун парса ÿстернĕ Амăшне
Чĕрĕ халлĕн кам манма пултарĕ?
Çавнашкал этем тăван йышне
Вăтăр кĕмĕлпе те улăштарĕ.

## АТТЕ–АННЕ ÇУНАЧĔ

Атте–анне хыпса çунать
Çунат парасшăн ачине.
Пире çĕклетĕр çав çунат
Этемлĕх маччине!

## ТĂВАН ЙЫШ

Тăван йыш сума суса
Мана вылятрĕ чĕр çинче.
Тăван йышпа пĕр чун пулсан
Эп те хăватлă çĕр çинче!

## ТĂВАН ЧĔЛХЕ

Анне чĕлхи — тăван чĕлхе,
Атте чĕлхи — тăван чĕлхе.
Çын пек çынах пулма хĕлхем
Парса тăрать пире чĕлхе.

## ТĂВАНЛĂХ ТЫМАРĔ

Тăвансем хунанă пĕр тĕпрен,
Тăванпа тăванăн пĕр тымар.
Тăван – йьш тымарĕ çирĕпрен
Тăвана манмашкăн çăмăл мар.

## ĔÇПЕ ТИВĔÇ

Чуну пулсан хастар —
Хĕрӳ ĕçрен ан тар,
Таран пулсан ĕçрен —
Тухатăн тивĕçрен.

## ĔÇРЕ — ХĂВАТ

Ĕç вăл, чăннипех те, ырă тус,
Вăл ẹтем хастарлăхне туптать:
Ыр ĕçе пилленĕ юрату
Иксĕлми хăватлăх çуратать.

## ХĂВНА ТУПТА

Çак чаплă ĕмĕре
Юравлă ĕç туп та —
Телей шыра ĕçре,
Хăвна ĕçре тупта.

## ĔÇЧЕН АЛЛИ

Ĕçчен çын алли, сăна,
Пиçĕхет ĕçри хура тарпа,
Танлаштарас килет ăна
Йывăça кун пана тымарпа.

## ЧУН ПИРКИ

Упрама пĕл çын чунне,
Хăвăнне те тыт таса:
Сан çинчен те ун чухне
Юрă хывĕç мухтаса.

## ÇЫНЛĂХ

Çĕр çине çуралнă чĕрĕ чун
Çынлăхне упратăр кашни кун,
Çынлăхне çухатнă этеме
Кам пултарĕ ырă çын теме?

## ХУ ЕПЛЕ — ЙЫШ ÇАПЛА

Кăмăлу пулсассăн анлă —
Йышпа пулăн эс тăванлă,
Кăмăлу пулсассăн ансăр —
Тăрса юлăн тус – тăвансăр.

## ЧУН ĂШШИ

Çын юратнă çын ăшши пулмашкăн
Питĕ кирлĕ чун ăшши.
Чĕрере чĕр вут çунманшăн
Эс кама ўпкелĕн – ши?

## ШĂПЧĂКА ИТЛЕНĔ МАЙ

Шăпчăка итлен итленĕçемĕн —
Чарăнатăн сывлама,
Шăратать вăл çемĕ хыççăн çемĕ
Мухтава тухасшăн мар.

## ШĂРÇА ПЕК

Тăвар каснă лайăх сăвăсем
Парнелес пулсассăн халăха,
Пуç ватса шыратăн сăнлăхсем,
Шăрçа пек суйлатăн сăмаха.

## ЫРĂ СĂМАХ

Ырă туйăм амăшĕ — сăмах,
Ырă ĕçĕн ашшĕ те вăлах.
Ырă çын каланă ыр сăмах
Ылттăн хакĕнчен те маларах.

## ЮРĂÇ ПУЛАССИ

Чаплă юрăç пулас кайăк
Сас ·парать çăмартарах,
Çитĕнсе сас хытнă майăн
Юрлама йывăртарах.

## ШĂНА

Шăнарса каланă пĕр Шăна:
— Эп таçта та пулнă ыр хăна!..
Вăл, чăнах, çитмен çĕр хăварман —
Ыр хăна ниçта та пулайман.

## ТУНКАТА

Хăвăртрах кĕрес тесе ĕçе
Ешерет пĕр вĕçĕмсĕр Ката,
Унщăн калама çук кĕвĕçет
Çĕрĕшсе минренĕ Тунката.

## ХĔВЕЛЕ

Çутăлса тăран тĕнче илемĕ,
Çулăм пек çунса тăран Хĕвел,
Эс пире пур нишлĕхрен имлетĕн,
Çирĕплĕх паратăн ӳт – пĕве.

## ЫРЛАССИ

Ырламасть пачах хăйне Çырла —
Вăл çапах çырла – тăр?
Хăвна ху, тăванăм, ан ырла —
Çын сана ырлатăр!

## ЫР СĂМАХ

Ырă туйăм амăшĕ — сăмах,
Ырă ĕçĕн ашшĕ те вăлах.
Ырă çын каланă ыр сăмах
Ырă ĕç туса çӳрет вăрах.

## ЭТЕМ

Çĕр çине çуралнă чун — этем,
Ман шутпа, асамлă чĕр илем.
Илемне çухатнă этеме
Май килмест нимле те «Çын» теме!

## ЮРАТУ

Чĕрери ыр туйăм вăрансассăн,
Виличчен хĕмлентĕр Юрату!
Туйăм – вут сӳнсе ларас пулсассăн,
Чĕрене çунтарĕ ырату.

## ЧĔРЕ ĂШШИ

Ырă çыннăн ытарлă чĕри
Тӳпери сар хĕвел пек вĕри.
Юнăх çыннăн чĕре ăшши çук,
Ятшăн çеç ун хавас калаçу.

## ЧĔРЕ ПИРКИ

Кашнинех чĕре пĕрре,
Кристалл пек чĕре — тупра.
Енчĕк ан пултăр чĕре,
Чĕрене таса упра.

## ШАЛТИ ТУЙĂМ

Тĕрлĕрен пулсан та кăмăл,
Пĕр пекех шалти вучах:
Кама кирлĕ пушă хăмăл,
Кама ют тулли пучах?

## ЭТЕМ ВИÇИ

Этем виçи пуянлăх мар,
Ĕçлес хăват — этем виçи:
Ĕçре пулсан кăна хастар,
Пулма пулать телей хуçи.

## ЭТЕМ МĔНПЕ ПУЯН?

Планета – Çĕр çинче
Этем пуян ăспа.
Çынна мул париччен
Этем пулма ăс пар.

## САНĂН КУÇУСЕМ

Савнă тусăм, санăн куçусем —
Илĕртӳллĕ тарăн кӳлĕсем.
Çав асамлă тĕпсĕр кӳлĕре
Эп путса вилме те хатĕрех.

## СĂМАХ ĂСТИНЕ

Пултарулăх амăшĕ — кĕскелĕх,
Уçăмлă ыр шухăш — ун уççи.
Сан пуçна ан çавăртăр хитрелĕх,
Эсĕ пул ăсталăхăн хуçи.

## ЮП КУРНĂ ÇĔР

Тăван çĕр тăварлă, чуна ырă,
Ĕç ачишĕн сиплĕ ун шăрши.
Çуралса юп курнă çĕр пек вырăн
Çĕр çинче тата мĕскер пур – ши?

## ТУЛĂХ ПУРНĂÇ

Кам ака – суха туса хăй курнă,
Кам тырпул ӳстернĕ ачаран,
Вăл пĕлет: телейлĕ тулăх пурнăç
Тĕвĕленмĕ пушă сăмахран.

## ЮРАТУ — ÇУНАТ

Юп курма пилленĕ юрату
Пултăр санăн çăмăл çунату —
Çăмăл çунатсем хăватлă чух
Хуть мĕнле çĕклем те пулĕ чух.

## ЮРАТУ — ТЕЛЕЙ ÇЫХХИ

Ик чĕре тапас пулсан тату,
Икĕ таса туйăм пĕр пулсан —
Çуралать чăн çепĕç юрату
Ырлăхпа телей çыххи пулса.

## ЮРАТУ ХĔВЕЛĔ ЯЧĔПЕ

Юратма савса ӳстернĕ мар – и
Аннесем пире вар сĕчĕпе?
Улăпла ĕçсем тытса тăвар – и
Юрату хĕвелĕ ячĕпе.

## ЮРАТУ ЮРРИ

Юратусăр юрă çуралаймĕ,
Юрату вăл — пурăнăç юрри,
Юрă юрламасăр пултараймĕ
Юратмашкăн хал пурри.

## ÇĂХАН

Çăхан — çăва çуратнă кайăк,
Çăхан — çăва çинчи чĕрчун.
Çавăнпа виле çеç уншăн лайăх,
Çавăнпа çăхавшăн чунĕ ун.

## ÇУЛ

Пурнăç йĕрĕнчен пĕр пăрăнмасăр
Аслă çула тухтăр утма çул,
Халăх йышĕпе пĕрле пулмасăр
Пĕчченшерĕн пурнăç тума çук.

## ÇЫВĂХ ТУС

Çывăх тус санпа хавассăн кулĕ,
Санпала хурланĕ чĕререн:
Хĕнлĕхре вăл саншăн хӳтлĕх пулĕ,
Чун ăшши вăл пулĕ сивĕре.

## ТĂВАН ЙЫШ

Тăван йышпала тăван анне
Вылятса ӳстерчĕ çулленех.
Тăван йыш савсассăн ачине
Эпĕ те хăватлă çĕр çинче.

## ЛЕКТОР

Япăх лектор сӳтĕк чĕлхипе
Тăрă шыв юхтарнă чух,
Унăн сăмахне итленипе
Ăш хыппи пачах та иртес çук.

# ĔРЕТСĔРЛĔХ ĔÇКĔРЕ

## БАХУСА ПУЛА

Пуçри ăса
Парнелен пулсассăн Бахуса —
Хăвăн телейне хăвах пăсан,
Кантăртан пулса тăран пуса.

## АВАЛХИ СĂМАХ

Ĕлĕкренпе пĕр сăмах:
Ĕçкĕ — пысăк пăтăрмах,
Ĕçкĕ ернĕ этеме
Ĕрет çуккă çын теме.

## ĔÇЕССИ

Ĕçесси сăваплă ĕçех мар,
Çапах чысра – ха сыпасси.
Эрехпе супсассăн ар
Кĕçех пулать этем асси.

## ĔÇКĔ

Ĕçкĕпе супатăн —
Ĕçлĕхрен тухатăн,
Ĕçлĕхрен тухатăн —
Ĕмĕлке пулса юлатăн.

## КАМА МӖНЛЕ

Чухласа калать ăсли:
— Сăринчен аван ăсли.
Урăхла уйлать айван:
— Ăслинчен сăри аван.

## КАМ МӖСКЕР СЫПАТЬ

Ӗҫкӗпе аташнă ҫын —
Ҫуттине сыпать,
Ӗҫ патне иленнӗ ҫын —
Пурнăҫне сыпать.

## СЫПАССИ ҪИНЧЕН

Сыпма анчах вӗрен —
Сăмса пулать иккен кӗрен,
Сыпассипе ялан супсан —
Пуҫлатăн курăнма сăпсан.

## ҪУТТИПЕ ЙӲҪҪИ

Ҫуттине сыпатăн —
Тӗрӗс ҫул ҫинчен супатăн,
Йӳҫҫине ырлатăн —
Тӗпсӗр йӳҫлӗхе путатăн.

## ҪУТТИ ЫР ТУМАСТЬ

Ҫуттине ялан ӗҫе—ӗҫе
Ăнтарма май ҫук ӗҫе,
Ҫуттине ăша иле—иле
Кӗҫ пулатăн чӗр виле.

## ЎСЁРПЕЛЕ УРРИСЕМ

Уррисем ятлаҫҫӗ ӳсӗре
Урмӑшса ҫӳренӗшӗн сӗре,
Ӳсӗрсем ятлаҫҫӗ уррине
Чыс туманшӑн «шуррине».

## ЭРЕХПЕ ШЫВ

Мӑй таран кӳпсен те ҫут эрех
Шывсӑр ӑш канаймӗ пурпӗрех.
Шывпала ҫеҫ ӑш канать пулсан,
Мӗншӗн ӗҫмелле ӑсран тухса?..

## ЭРЕХПЕ САРА

Мухтанса калать Сӑра:
— Этеме кӑларӑп чыссӑра!
Эрленсе калать Эрех:
— Эп этемшӗн вилӗмпе пӗрех!

## ЭРЕХҪӖ

Эрехпе чысланӑ вӑл ӗҫе,
Тӑванне, тусне, йӑхне... —
Ҫав чыса пула кӗҫех
Ҫухатнӑ хӑйӗн чыслӑхне.

## ЭРЕХҪӖ САЛТАВӖ

Эрехҫӗ те сӑлтавсӑрах
Ӗҫмест иккен эрех — сӑра;
Ӗҫет шавах хуйха пула,
Хуйхи вара... ӗҫке пула.

## СĂМАХЛĂХА КĔРЕН

Сыпма анчах вĕрен —
Сăмсу пулать кĕрен,
Сăмсу пулсан кĕрен —
Сăмахлăха кĕрен.

## КАМ КАМА ПĂСАТЬ

Суйма пăхаççĕ чиперех:
— Этем ăсне пăсать эрех!
Калас килет ман хирĕçле:
— Этем ăсран тухать ĕçсе!

## ÇАПАХ ЧЫСРА

Этем тени эрех пирки
Часах пулать тĕнче асси,
Çапах чысра эрех пăрки,
Шухăшламасăр сыпасси.

## СĂПСА

Асăрха – куçла:
Сыпсан – сыпсан
Курăна пуçлать
Этем сăпсан.

## ШАХВăРТСА КАЛАÇНИ

— Мĕн пирки сăмсу ытла кĕрен?
— Хĕллехи çанталăк сивĕрен.
— Мĕн пирки тата çăва тухсан
Яланах сăмсу хĕп – хĕрлĕ сан?

## ĂСЛАПА ХĂМЛА

Малтан пылак Ăсла
Пуçа кĕме ăслать.
Кайран хаяр хăмла
Пуçра ăса чăмлать.

## ЭРЕХ ЭРЛЕНЧĔК

Урнă ĕне сĕтне ан су —
Эрех пирки ăсна ан сут.
Ĕçен пулсан ăсна сутса —
Пуçна çиен çултан супса.

## АЛĂК КĂТАРТАКАН

Ĕçпеле пыракан çынсене
Вăл кăтартнă шав алăк çине.
Хальхинче ыр çынсем хайхине
Алăкпа паллаштарчĕç хăйне.

## СУЙКĂН

Чăнлăхран чĕри инçе,
Куçкĕретĕн «куç пăвать»:
Пурнăçа кĕмен ĕçе
Пурнăçланă пек тăвать.

## ХАРАМ ПЫРСЕН ХАВАЛĔ

Кахал çынсем ырлан илем:
— Сахал парам, нумай илем.
Кахал çынсем саван пейзаж:
— Сĕтел тулли сăра, пыл, аш.

## МĂНТТАЙСЕМ ПИРКИ

Ашшĕ – амăш ĕнсийĕ çинче
Пĕр акмасăр ансат вырмалла,—
Пăнтăхмашкăн майсем пур çинчех
Мĕн пирки мăнттайсен ырмалла?

## ЭСТЕТ

Мана Эстет
Куллен хистет:
— Мана эс,— тет,—
Хуллен хĕс,— тет.

## ЙĂПĂЛТИ ЙĂЛИ

Чĕлхере пулсан сар çу —
Сан майлă ăнăçу,
Чĕлхере пулсан елей —
Тупатăнах телей.

## ЙĂВАШ ЙĂВАН

Сĕмсĕре
Сĕре – сĕре
Йăваш Йăван
Тăвать йăва.

## ЭПИГРАММĂСЕМПЕ ЭПИГРАФСЕМ

### АМĂШНЕ МАНАКАН ЭТЕМ МАР!

Пултарчĕ пулсан чĕр этем
Манмашкăн тăван Амăшне,—
Вăл пултарĕ манма тусне те,
Пултарĕ сутма Çĕршывне.

### АРĂМА

Уйрăлас сăмахпа хăрататăн
Музăпа пулнăран пĕр кавар:
— Мана мар, эс ăна юрататăн,
Эс саватăн ăна, мана мар!

### ХĔРĔМЕ

Хĕртсе пăхан хĕвел
Илентĕр сан хĕве,
Эс ун хĕрӳлĕхне
Илсем ху чĕрӳне.

### ЫВĂЛА

Ачам, мĕн пĕчĕкрен
Ыр тĕслĕхе тĕсе:
Çухалмĕç тĕнчерен
Ыр ĕçĕн тĕсĕсем.

## ЙЁКСЁКЕ

Калас пулсассăн чĕререн:
Çак сутă тĕнчерен
Куçсан кăна леш тĕнчене
Эс савăнтарăн çынсене.

## ПАВРА ЭТЕМЕ

Чарăнма пĕлмен чĕлхе
Инкекшĕн вĕчĕхет,
Хупăнма пĕлмен çăвар —
Инкек кӳрен çăва.

## УСЛАПА

Санпа пĕр тантăшсем — ăста,
Пурăнман вĕсем çĕтсе.
Пĕлтер: çур ĕмĕре çитсе
Ĕçри ăсталăху ăçта?

## ХАРАМÇĂНА

Çĕнĕ пурнăç çуртне тусанах
Хатĕр эс йышăнма ыр кĕтес:
Харампыр таврашне — тусана
Ĕçлĕ халăх çуртне ма кӳртес?

## ЭТЕМ ЭС ПУЛ.

Юрăçа тухас – и пĕчченех,
Кирккапа ватас – и шурă чул?
Кам пулсан та пурпĕрех
Чăн малтан Этем эс пул.

## СĂНАВСЕМПЕ СĂНАРСЕМ

### ПУРНĂÇА ЮРАТСАН...

Пурнăç ырă ытла та мăнтарăн —
Туйăм çитмĕ ăна юратма.
Пурнăçа юратсан çеç пултарăн
Çын курман вăй – хăват çуратма.

### КАШНИ ЧУН ТĔРЛĔРЕН

Тĕнчере кашни чун тĕрлĕрен,
Ачаран эс ăна ăнкаран:
Пĕрисем — пиçенпе вĕлтĕрен,
Теприсем — сертепе пултăран.

### ЭТЕМ ЁМĔРĔ

Чечеклĕ ачалăх — çур кунĕ,
Çу кунĕ — хавас яшлăхра,
Кĕрнеклĕх — ытарлă кĕр кунĕ,
Хĕл кунĕ — салху ватлăхра.

### КĂМĂЛ

Яш пăхать иртĕнме —
Тĕмсĕлет çитĕнме,
Ват енне кайнă чух
Яшланма шутлĕ чун.

## ХЁРСЕМ ПИРКИ

Авланас тенĕ чух
Сар хĕрсем шыраса тупма çук.
Ватăлса пынă май
Сар хĕрсем калама çук нумай.

## ИРСĔР КУÇ

Ирсĕр каччă таса хĕр çине
Сĕмсĕрле пăхса илнĕ чухне
Хĕр çинчи юр пек шурă кĕпе
Варланать тейĕн çав тикĕтпе.

## ЁМĔР ПИРКИ

Çак çутă тĕнчере
Пĕр ĕмĕр çех пире.
Пĕртен пĕр ĕмĕре
Ан çитĕр чĕмере.

## АРĂМ — ПАРĂМ

Шÿтлесе калаççĕ: арăм —
Çумра çÿрен чĕр парăм.
Тен, тухас тесе – и парăмран
Уйрăлма пăхаççĕ арăмран.

## ТУРАТСĂР ТУНКАТА

Табак туртмасть, эрех ĕçмест,
Чĕрре кĕрсе те хирĕçмест.
Усал курман унран ката...
Çапах ун ячĕ — Тунката.

## АРĂСЛАНПА КУЯН

Кам умĕнче пуç таян,
Камран пулăшу ыйтан,
Вăл — хăватлă Арăслан,
Эс — куçран пăхан Куян.

## ЙЫТĂПА УЙĂХ

Еплерех вĕрсен те хытă
Уйăха катаймĕ Йытă.
Вăл пит хытă вĕрнĕрен,
Ӳкмест уйăх тӳперен.

## КАÇ ТАТА КУН

Каç килтĕр, ан тив, хурараххăн,
Каç пытăр хăй майлă вăрах.
Кун пулĕ тата çутăрахxăн,
Кун пулĕ тата хавасрах.

## ÇĔРШЫВРАН УЙРĂЛСАН

Кашниех чĕререн юратать
Хăй çуралнă сăваплă çĕре,
Çавăнпа хĕсĕнсе ыратать
Çĕршывран уйрăлсассăн чĕре.

## ЧĔРЕ ĂШШИ

Ырă çыннăн ытарлă чĕри —
Çынна ыр тумашкăн вĕри,
Ирсĕр çыннăн чĕре ăшши çук,
Вăл пулсан та — çынна парас çук.

## СТРАТОСТАТ

*/Я. Белинскирен/*

Сывлăшпа та, тиев йывăртан та
Стратостат сулăнать çĕрелле.
Ытлашши нăклăха вăркăтан та
Çĕкленетĕн каллех çӳлелле.

## ХУÇĂК ЁМĔТСЕМ ПИРКИ

Пулаççĕ ун пек минутсем —
Хуçăлаççĕ шартах ёмĕтсем.
Хуçăлса ӳкиччен вĕсене
Эс пултар тавăрма виçене.

## АПТРАШКИНСЕМ ПИРКИ

Кăвакал аптраса çитнĕ май,
Кутăнла та ишет пит самай.
Пит абстрактлă картина курсан
Асилетĕн çавна эс ялан.

## ШУРĂ ЮР

Кам хăять çĕн юра тиркеме?
Вăл таса та шап – шур.
Чун ăшшисĕр таса этеме
Ят парассăм килет — Шурă юр.

## МĔН–МА–ШИ ПУР?

Урмах пăхать усал чĕре,
Унран куратăн хур.
Усал этем мĕн – ма – ши пур
Çак çутă тĕнчере?

## ЫТАРЛĂ ЫЙТУ

Тăрăшан пурнăçа хурлама —
Кăкăрна тăвăрлать тарăху.
Каласамччĕ: ăна юсама
Мĕн тытса турăн ху?!

## ÇУРАЛНĂ ÇĔРШЫВ

Атте вăл — çуралнă Çĕршыв,
Анне вăл — Çуралнă çĕршыв,
Аттепе аннерен те ырри
Урăхран тĕнчере мĕн пур — ши?

## АН КĔТ ЛĂПКА

Вĕрен, ĕçле, сăна —
Кĕтсе ан лар лăпка.
Пĕр çитĕннĕ çынна
Мĕскер тума сăпка?

## ХĂВНА ПĔЛСЕМ МАЛТАН

Ал — ура пухиччен хăнăху
Эсĕ тивĕç пĕлме хăвна ху.
Пĕлейместĕн пулсан хăвна ху
Мĕнех кĕттĕр санран халăху?

## МĔН КИРЛĔ УРĂХ?

Тăван Çĕршыв ятне,
Ун чаплă вăхăтне
Ĕçпе пулсассăн юрăх
Тата мĕн кирлĕ урăх?

# «А»–па «Я» —
# САС ПАЛЛИСЕМ ТАРАН

– А –

## АЙВАНА

Айванлăх пуснă чух сĕре
Эс пер, тăванăм, чĕмсĕре:
Çăвар уçмасăр ларнă чух
Айванлăхна çын курас çук.

## АЙВАН ЭТЕМШĔН

Айвана канаш паран —
Хуçăлатăн çурмаран:
Уншăн тĕрĕс, ыр сăмах
Çиме юрăхсăр çăмах.

## АН ПУЛ

Ан пул ăнман тĕве,
Чухла кăшт виçене:
Пурне те ан тие
Эс хăв лаву çине.

## АСТУТАРНИ

Кам Çĕршыва манма пултарĕ —
Çав манса кайĕ Амăшне.
Кам Амăшне манма пултарĕ —
Çав йăлтах манĕ тус – йышне.

## АЧАПА МУЧИ

— Ёҫкёллё ҫын сăмси ма хёрлё? —
Ыйту парать Ачи. —
Пичё хёрелме маннăран, —
Хуравлать кулса Мучи.

– Б –

## БАЛ

Бал ҫинчен мёскер пуплеҫҫё,
Балсемпе ăс — хал виҫеҫҫё:
Бал ҫитсен — ВУЗа илеҫҫё,
Бал ҫитмест — ҫула пўлеҫҫё.

## БАЛЛАДА

Халăх ăслăхне малтан аллатăн,
Сăвă йёркине паратăн чун,
Ун чухне тинех пулать баллада,
Унсăрăн баллада хывма ҫук.

– В –

## ВĂРЛĂХ

Ыр ҫынсем хăварнă сан валли
Вăрлăх — вăтăр ҫичё саспалли.
Ҫакă вăтăр ҫичё пёрчёрен
Мул акса ўстер эс ҫёнёрен.

## ВĔРЕНТӲÇĔ

Явса курман вăл вĕрен те,
Пĕлмест хăва хулли авма,
Хăй çапах та вĕрентет
Явса сӳтме, сӳтсе явма.

## ВĔЧĔХ

Вĕчĕх çын нихçан ăшпиллĕн
Тӳрĕ çын çине пăхман:
— Эс мана пĕрре çеç питлĕн —
Пулса тăрăн ĕмĕрлĕх тăшман!

## ВУЛАВÇĂ

Вулавçă вулать,
Вуланă май кулать:
Кулмашкăн май пурри,
Çак пурнăçăн ырри!

## – И –

## ИЛЕМ

Умра пулас пулсан чăн – чăн ИЛЕМ
Эп те кăштах пăхса илем.
Ан хуç эс ушăн кăмăла —
Илем çине пăхма йăла.

– К –

## КАВĂН

Варри çĕре пуçланă май,
Кавăн тухнă пăсăка,
Çапах та çак тивĕçсĕр Мăнттай
Хăйне хунă пысăка.

## КĔЛМĔÇĔ

Кунĕн – çĕрĕн кĕл туса
Кантăртан пулмасть пуса,
Кĕлĕ усă кӳрес пур,
Сахăр пулĕччĕ шур юр.

## КĔРКУННЕ

Кĕр çитсессĕн Çутçанталăк
Хурланать пулас сĕре:
Мăртăхать те пĕр – ик талăк,
Куççульне тăкать çĕре.

## КУЛĂШ КУНĔ

Кулас килсен — кул,
Култаруллă пул.
Кулăш кунĕ çитнĕ чух
Кулкалани питĕ чух.

## КОМПОЗИТОР

Чăнлăха юратăр чĕререн,
Чăнлăхра ăсталăх пурăнать.
Чăнлăхпа ĕнернĕ кĕвĕрен
Чăн паха СИМФОНИ çуралать.

## – М –

## МĂНАÇЛĂХ

Илем – куçпа куран тасалăх,
Илем – ытарлă сăн–сăпат,
Илем – асра юлан асамлăх,
Этем чунне çĕклен хăват!

## МĂНАÇЛĂ ПУÇЛĂХА

Эс хăвна мала хуран тӳрех,
Çиçĕм çиçтерме пăхать куçу.
Ан айкаш, тăванăм, пурпĕрех
Аслати хăвачĕ санра çук.

## МĂНАÇЛĂХ ПИРКИ

Пулассу килсессĕн çӳллĕ ту,
Çӳллĕ ту эс пул,
Ту пулса сумран анчах ан тух,
Этем, йĕркеллĕ пул!

– П –

## ПУЛАСЛĂХШĂН

Çутçанталăк кĕвĕ кĕвĕлет
Çимĕç ÿстерме кирли çинчен,
Улмуççи çав ырă кунсенче
Пуласлăхшăн тĕвĕ тĕвеллет.

## ПУЧАХСЕМ

Мĕн тери илемлĕ уй – хирте:
Тырпул ÿсет, хĕвел хĕртет...
Эп уйлатăп: йĕплĕ пучахсем —
Çĕр çинчи телейĕн сыххисем.

## ПЬЕСА ÇЫРАКАНА

Ăсран пулсан маттур,
Эс пулăн драматург.
Ăс – хал пулсан мăран —
Ĕç тухмĕ драмăран.

– С –

## СĂВĂ ÇЫРАССИ

Сăвăсем çырма сăпайлăх кирлĕ,
Юрă çырма кирлĕ юрату,
Сăвăра сăмах янратăр вирлĕ,
Курăнтăр унта сан хăвату!

## СĂМАХ ĂСТИНЕ

Пултарулăх амăшĕ — Кĕскелĕх,
Усăмлă ыр шухăш — ун усси.
Сан пусна ан савăртăр хитрелĕх,
Эсĕ пул асамлăхăн хуçи.

## – Ç –

## ÇАВРА ÇĔР

Çавра Çĕре асна ил —
Çĕр чăмăрĕ пирĕн кил:
Çавра Çĕрĕн чăмăрне
Çывăх кур эс ĕмĕрех.

## ÇУМĂРПА ХĔВЕЛ
/юптару/

Çумăр шывĕ сарă Хĕвеле
Путарма шутланă пĕвене.
Хĕмленсе йăл кулнă та Хĕвел,
Типейсе те ларнă мăн пĕве.

## ÇУТÇАНТАЛĂК ÇИНЧЕН

Çут тĕнче çинчен çырмашкăн
Кирлĕ, теççĕ, çутă ăс.
Ăс тени çукрах пулсассăн
Таса илемлĕхе ан пăс.

## ÇУРКУННЕ ПАЛЛИ

Çурхи хĕвел çиет юра,
Унта – кунта уй – хир хура.
Хура çĕрсем пурне кура
Вĕçсе килет кĕçех курак.

– Т –

## ТĔРЛĔ ТЕЛЕЙ

Тĕрлĕрен пулаççĕ телейсем,
Тĕрлĕрен пулаççĕ телейсем:
Пĕрисен телейĕ — теттере,
Теприсен телейĕ — тĕлĕкре.

## ТЕТЕ

Пĕртен пĕр юратнă тетеçĕм,
Пĕртен пĕр юратнă, тетем:
Çынлăхра — чĕрĕ çыннăн телейĕ,
Хайне хăй ыр парне вăл — Этем.

## ТĔЛĔКÇĔСЕНЕ

Çĕршывра пур халăх хĕмленсе
Юмаха чăн тунă чух,
Тĕлĕкпе çес йăпанса
Пуранннин хисепĕ çук.

## ТУСĂМА

Сахăрпа Тăвар пăхма пĕрех,
Тутанса пăхатăн та —пĕр мар.
Тусăм, мана сахăр ан сĕнех,
Эп санран ыйтап пулсан тăвар.

## – У –

## УЛТАЛУ

Асанне, сана мĕн тем,
Ас Анне тесе йĕклем.
Асатте, сана мĕн тем,
Ас Атте тесе йĕплем.

## УЛШĂНУ

Çăмăлттай пĕрре курсах
Сар хĕре савса пăрахнă.
Чăн сăмах! Савма пăрахнă
Хĕрĕ арăм пулсанах.

## – Ф –

## ФЕНИКС

Хĕл çитсен çил ачи вĕçсĕрех
Шур юртан вил тăпри купалать.
Ан айкаш, Çил ачи, пурпĕрех
Çĕнĕрен çурхи кун пуçланать.

## – Х –

### ХАНТТАРСЕНЕ

Ăраскал çине манса
Янтине çеç сĕмленсен
Пурнăç юлĕ пушанса,
Ĕнсе ларĕç ĕмĕтсем.

### ХАМА ХАМ

Сар Хĕвел теместĕп хама хам,
Ан тив хĕлхем кăна пулам,
Анчах та хамăн халăха
Ыр тăваслăхпа çунам.

## – Ч –

### ЧАКАК

— Эй, Чакак, хăпар чакак,
Эс ăçта васкатăн çак?
— Эс, ачам, мана ан чар,
Элĕкре паян пасар.

### ЧĂВАШ ХĔРĔ

Ĕлĕкрен чăваш ĕçченĕ
Пит хытарнă хăй хĕрне,
Чăваш хĕрĕн лайăх енĕ —
Тыта пĕлнĕ вăл хăйне.

## ЧĂПĂРККА

Чăх тени чĕпписене
Хĕн – хăрушлăх çитсенех,
Пуçтарать çунат айне.
Çавăн пек этем — Анне.

## ЧУРĂС ЧУН

Чурăс чунлă чĕмерен
Хуть хăçан та пĕр сăмах:
— Кашни çыншăн тĕнчере
Ман ăçтан тупас çăтмах?

## – Ы –

## ЫРĂ–ÇКЕ ТĔНЧЕ!

Çĕн уйăх сапнă чух ĕнче
Тĕлĕнсе калатăн: — Ах!
Таса хĕвелĕн çуттинче
Татах та капăр – çке тĕнче!

## – Э –

## ЭС ПУЛ ЭТЕМ

Пултару тупан – и сассупа,
Сăрласа тăватăн – и илем —
Хуть кам пулас пулсассăн та
Чăн малтан эс пул ЭТЕМ.

## – Ю –

### ЮТ КИЛ

Ют çын килӗ — ача сӑпки мар,
Ют пӗлмест лӑпкаса йӑпатма,
Ют çӗрте тупма çук сиктӗрме,
Чун чӗрешӗн ют вырӑн — тӗрме.

## – Я –

### ЯТ

Атте – анне кула – кула
Мана ят панӑ ***МИКУЛА***.
Кам пӗлет, тен, çавӑнпа
Ачаран эп тӳслӑ кулӑпа.

### ЯШСЕНЕ

Атте – анне пилленӗ пӳ,
Атте – анне пилленӗ чун:
Ан çун пулас тесе Ёмпӳ,
Ыр çын пулас тесе эс çун.

# *САН ЎКЕРЧЁКСЕМ КАЛАСА ПАРАҪҪЁ*



*Поэтăн амăшĕ Розова /Цветкова/Фекла Филипповна ывăлĕпе, Тольăпа. Хусан, 1914 ç.*



*Анатолий Розов — Н. Ыдарайăн пиччĕшĕ.*



*Николай Ыдарай.*





*Розова /Цветкова/Фекла Филипповна.*

*Васильева Елена Сергеевна — поэтăн мăшăрĕ, Хусан, 1982 ç.*



*Сулахайран сылтăмалла: Александр Тимофеев, Николай Ыдарай/Васильев/, Николай Казанов, Шупашкар хули, 1947 ç.*



*Елена Сергеевна Васильева,*
*Николай Васильевич Ыдарай /Васильев/.*



*Николай Ыдарай, Наташа Петрова — Е. С. Васильевăн йăмăкĕн хĕрĕ, Çĕнĕ Шупашкар хули, 1983 çул.*



Чăваш писателĕсен кану çуртĕнче «Кувшинкăра». Малта Юхма Мишши, Юлия Силэм, Валентина Эльби, Федор Мадуров — скульптор, Семен Дмитриев, Лидия Сарине, Зоя Нестерова лараççĕ. Хыçалти ретре Петĕр Çăлкуç, Нина Васильева, Александр Угольников, Иван Шахтер, Людмила Сачкова, Николай Симунов, Николай Ыдарай, Ева Лисина, Василий Петров тăраççĕ.



*Геннадий Кириллов — Пукане театрĕн артисчĕ,*
*ача-пăча писателĕ Николай Ыдарай, 2001 çул.*



*Николай Ыдарай, Петр Иванович Григорьев, 1998 çул.*



Ӳкерчӗк çинче: Алена Васильева /Константинова/, Сергей Анатольевич Васильев, Елена Анатольевнăпа Елена Сергеевна Васильевасем, Николай Ыдарай/ Васильев. Çӗнӗ Шупашкар хули, 2001 çул.




***Çĕнĕ Шупашкар хулинче Çĕнтерӳ кунне уявланă чух. 2004 çул.***

ÇУЛ ИРТНĔÇЕМĔН УЛШĂНАТЬ ЭТЕМ...













*Николай Ыдарайăн тĕрлĕ вăхăтра ӳкерĕннĕ сăн ӳкерчĕкĕсем*

## ТУПМАЛЛИ

ТĂВАНЛĂХ ТĂВАРĔ ....... 5
КУЛĂШ КУСТĂРМИ ....... 9
ФИЛОСОФИ ПĔРЧИСЕМ ....... 11
ПУРНĂҪРИ ПУЛĂМСЕМ ....... 16
ĂСЛĂХПА ĂСТАЛĂХ ....... 24
ĔҪПЕ ĔҪЧЕНЛĔХ ....... 25
ЭТЕМЛĔХ ЭЛЕМĔ ....... 31
ТУЙĂМ ТУРТИСЕМ ....... 36
ПАРНАСПА ПЕГАС ....... 41
ПУРНĂҪ ЧĂНЛĂХĔ ....... 46
УҪЛĂХПА УҪĂМЛĂХ ....... 49
ВĔРЕНӲ ҪИМĔҪĔ — ПĔЛӲ ПИЛЛĔХĔ ....... 50
САМАНА САССИ ....... 63
ĔРЕТСĔРЛĔХ ĔҪКĔРЕ ....... 73
ЭПИГРАММĂСЕМПЕ ЭПИГРАФСЕМ ....... 79
СĂНАВСЕМПЕ СĂНАРСЕМ ....... 81
«А» – па «Я» — САС ПАЛЛИСЕМ ТАРАН ....... 86
СĂН ӲКЕРЧĔКСЕМ КАЛАСА ПАРАҪҪĔ ....... 98

# НИКОЛАЙ ЫДАРАЙ
## /Васильев Николай Васильевич/

# УМНЫЕ ИЗРЕЧЕНИЯ — ЗОЛОТЫЕ ЗЕРНА

Стихи

на чувашском языке

Редактор *Г. С. Дмитриева*
Компьютерный набор, верстку и
оригинал—макет подготовил
*Н. К. Кушманов*

Сдано в набор 12.05.2004 г. Подписано к печати 27.06.2004 г.
Формат 84х108 1/32. Бумага офсетная.
Гарнитура Балтика. Печать офсетная.
Усл. печ. л. 6.5 Тираж 100 Цена «С»

Лицензия № 06277, серия ИД от 14.11. 2001 года
Министерства Российской Федерации по делам печати.

30=00